4166 VI-131

Н. МРАНЬКА

# БУРЛАКСЕМ



ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ

6
Θ.I.K.

Н. МРАНЬКА

# БУРЛАКСЕМ

(ЭЛНЕТ)

ТӐВАТӐ АКТЛӐ ТӐХӐР КАРТИНӐЛЛА ДРАМА

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧАВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

## ВЫЛЯКАНСЕМ

1. Якур.
2. Павăл } Якур ывăлĕсем.
3. Ваçли }
4. Анук – Павăл арăмĕ.
5. Иван—йывăç юхтаракан çĕрте ĕçлекен бурлак.
6. Укахье—Иван арăмĕ.
7. Микула } бурлаксем.
8. Семен }
9. Морев—большевик.
10. Чекалкин—меньшевик.
11. Мĕкĕте—кулак.
12. Карпов—хуçа.
13. Макдональд—Англири суту-илӳ фирмин представителĕ.
14. Староста.
15. Стражник.
16. Офицер.
17. Çамрăксем, бурлаксем.

## ПĔРРЕМĔШ АКТ

# 1-мĕш картина

Хура лутра пӳрт. Пӳрт тулли халăх. Вĕсем Павăла салтака ăсатма пынă. Сарлака сак çинче çамрăк ача хăрăк-харăк тальянкă купăс тытса ларать. Сĕтел хушшинче Якур, Морев, Микула тата темиçе ватăрах çын пăтă çисе лараççĕ. Вĕсене хирĕç, пукан çинче Павăл ларать. Ун урине сĕтел уринчен пиçиххипе çыхнă. Мăй урлă тутăрсем çакса тултарнă. Сĕтелрен инçе мар ансăр сак çинче: Иван, Семен тата ытти çынсем лараççĕ. Тĕпелти хĕрарăмсем хушшинче Ваçли тăрать. Укахьепе пĕр-икĕ хĕрарăм кутамкка ăшне тĕрлĕ çимĕç тавраш чиксе хатĕрлеççĕ. Халь çеç кучченеç илсе килекенсем те пур. Хăшĕ йăва пĕçерсе пынă, теприсем—пашалу, хăпарту тавраш, чăх какай тата ытти те. Анук, чунĕ хурланнине палăртасшăн мар тăрăшса, сăра тултаратултара ăсатма пынă çынсене ĕçтерет.

**Якур.** Кĕркури ачам, эсĕ таçта та çитсе курнă çын... Çӳренĕ çĕрте илтмен-и, вĕçĕ пулать-ши ку вăрçăн?

**Морев.** Ăçтан пĕлес ман, кукка? Эпĕ те сирĕн пекех мĕскĕн çын... Калăпăр: эсир акă, ялта çĕр ĕçлетпĕр тетĕр. Çĕрĕ хăвăра тăрант-

масть. Ют аннерен те хаяртарах вăл сирĕншĕн. Аптранипе бурлака тухса каятăр. Миçе миллион тенкĕлĕх йывăç антарса паратăр эсир Мĕкĕтепе Карпова... Хăвăр каллех выçă пурнатăр. Эпĕ те сирĕн пекех пусмăр айĕнче пурăнатăп, кукка. Мĕн ĕçлемен эпĕ? Çĕр кăмрăкĕ те кăларнă... Грузчикре чух, сирĕмшер пăт йăтса, шăмма-шакка ватрăм. Кочегарта чух, вĕри хуран панче ăша пĕçертрĕм. Тутă пурăнса кураймарăм. Мĕншĕн тесен пирĕн ĕç вăйне кӳпсе выртакан сĕлĕхсем: мул хуçипе çĕр улпучĕсем пур. Шутпала, пĕтĕм çутçанталăк пирĕн пулмалла. Эпир, çак ĕçпе хăпарнă аллăмăрсемпе, тĕнчери мĕнпур кирлĕ ырă япаласене тăватпăр.

**Микула.** Ку пит те тĕрĕс...

**Якур.** Ĕçлесе пуяс çук, пулсан—пулăн курпунлă, тенĕ ваттисем ĕлĕкренех.

**Морев.** Вăт вăрçă тени те вăл, çавăн майлă, кукка... Акă, калăпăр, икĕ йытă пĕр шăмă татки выртнине курччĕр-ха. Пĕри тепринчен туртса илесшĕн вилес пек тӳпелешĕç. Вăйли туртса илĕ... Вăйсăртараххи хӳрине усса килелле чуптарĕ. Тин вара вăрçă пĕтни çав пулĕ...

**Якур.** Тем эсĕ, юптарса калаçан, Кĕркури.

**Микула.** Чăнах, нимĕн те ăнланмалла мар.

**Иван.** Илтрĕн-и?.. Кама йыт вырăнне хывать вăл?

**Семен.** Эй, ха?.. Ан калаç терĕм-иç!

**Павăл.** Кулăшла калаçан эсĕ, Кĕркури пичче... Ун пек ăçтан вăрçă пĕтни пултăр вăл. Вăл йытăсем ыран тĕл пулсан, каллех вилес пек тӳпелешеççĕ вĕт.

**Морев.** Тĕрĕс, Павăл. Ыран тепĕр шăмă тупсан, çав йытăсемех тепĕр хут тӳпелешме тытăнаççĕ.

**Якур.** Апла тесен, вăрçăн вĕçĕ пулас çук...

**Морев.** Ма пулас çук, пулать...

**Якур.** Хăçан?

**Морев.** Тĕнчере кукка, пуринчен те ăслă пĕр çын пур.

**Якур.** Кам вăл?

**Морев.** Ленин...

**Якур.** Ленин? Илтмен ун пек ята. Янрал тавраш пуль?

**Морев.** Янрал мар, кукка. Ленин—хамăр пек çынах. Вăл вĕрентнĕ тăрăх, эсир чухнехи вăрçа-и, хальхине-и, вĕсене пурне те Мĕкĕтепе Карпов пек хуçасем тата ытларах пуйччăр тесе тапратнă. Вăрçă чарăнтăр тесен, влаçа рабочипе хресчен аллине илес пулать.

**Якур.** А, патша?

**Морев.** Патша-и?

**Семен.** Э-э...

**Якур.** Çĕр çинчи пурнăç Мĕкĕтепе Карповран килмест, турăпа патшаран килет. О, воспоти помилуй...

**Морев.** Эх, кукка... Патша çинчен акă мĕн илтнĕ эпĕ... Питĕрти рабочисем, мулхуçисен пусмăрне тÿсеймесĕр, патшаран пулăшу ыйтма шут тытнă. Вара январĕн 9-мĕшĕнче, вĕсем çĕр хĕрĕх пин çын пуçтарăнса урама тухнă. Унта ачаллă хĕрарăмсем те пулнă, ватти-вĕтти те... Вĕсем патшан портретне, турăшсем, элемсем йăтса пынă... Анчах патша, мирлĕ шухăшпа хăйне йăлăнма пыракан халăха, систермесĕрех, персе пăрахма хушнă. Çав кун пин çын ытла вĕлернĕ вара... Икĕ пин çын ытла амантнă... Патша вăл йытă çеç те мар, вуникĕ пуçлă çĕлĕн вăл...

**Якур.** О, воспоти помилуй...

**Семен.** А батюшки мой, каласа хучĕ!

**Иван.** Кунта ыррине курас çук, пуçсем шĕкĕрех пек чух, шăвас часрах. (*Васкаса тухса каять*).

**Морев.** Вăрçă пĕттĕр тесен, эпир те эсир те ырă пурнăç курас тесен, чи малтан çав çĕлен пуçне çапса çĕмĕрес пулать!

**Якур.** Чарăн!.. Эпĕ сана ырă сунса сĕтел хушшине лартрăм... Эсĕ? О, воспоти помилуй...

**Морев.** Ан çилен кукка... Курманни нумай пулать те... Çула май, ăшăнмалла кĕрсе тухас терĕм. Калаçса ларма вăхăт та çук ман. (*Сĕтел хушшинчен тухса.*) Çăкăр-тăваршăн тавтапуç, кукка... Ну... Сывă пул, Павăл. Чипер çаврăнса кил...

**Микула.** Ăçталла каятăн ĕнтĕ?

**Морев.** Чулхуланах каяс шутлă-ха, Микула. Сывă пулăр...

(Васкаса тухса каять. Пўртри халăх шăп хытса ларса юлать. Урамра шăнкрав шăнкăртатнă сасă, салтак ачисем юрласа иртсе кайнă шав илтĕнме пуçлать.)

**Укахье.** Ак, Петĕрсем карĕç пулас...

**Якур** (*пўртри халăх хускалма тапраннине курса*). Тăвансем, ан хускалăр-ха эсир... Çийĕр... О, воспоти помилуй...

**Анук.** Аяй турă, мĕн курас?..

**Укахье.** Ытлашши ан макăр-ха эсĕ, тусăм. Хăна-ху ванни çеç. Çурлас пек макăрсан та, турă çырнинчен иртес çук. Турă пиллене пулсан, сывах таврăнĕ...

**Анук.** Ах, тусăм... мĕнле чăтас-ха... Уйăрăлмалăх мар, курмалăх та пурăнаймарăмăр-çке...

**Укахье.** Çаплах та, чăтас пулать, тусăм... Тем пулсан та ĕнтĕ, салтак ачи сахăр мар, çăвара хыпса юлас çук.

(Староста кĕрет.)

**Староста.** Ман килес... (*Пуç тая-тая сăхсăхать.*)

**Якур.** Килĕрех, килĕр, Трофим Васильч.

**Староста.** Пĕри сирĕн патăртан тухса ял пуçнелле вĕçтерчĕ, кам пулчĕ вăл?

**Якур.** Петĕр кĕрўн Кĕркурийĕ.

**Староста.** Морев-и?

**Якур.** Çавă, Трофим Васильч... Çула майлă кĕтĕм терĕ те, тем васкарĕ... Атя-ха, сĕтел хушшине иртсе лар.

**Староста.** Ларса тăмах вăхăт çук, Якур пичче... Ыттисем кайрĕç.

**Якур.** Кайрĕç пулсан та, çăкăр-тăвартан аслă пулас марччĕ. Кин, Трофим Васильча сăра ĕçтерччĕ...

(Анук, макăрнине палăртасшăн мар тăрăшса, сăра тултарса парать. Павăл эрех ĕçтерет.)

**Староста** (*эрех черккине тытса сăхсăхать, кĕсъинчен укçа кăларса парать*). Телей пултăр, Павăл... Укçана каялла çавăрса пама чипер çаврăнса кил.

**Павăл.** Эс калашле пултăрччĕ ĕнтĕ, Трофим Васильч.

**Якур.** О, воспоти помилуй...

**Староста** (*пĕр-икĕ кашăк пăтă сыпкаласан сĕтел хушшинчен тухса сăхсăхать*). Тавтапуç çăкăр-тăвара.

**Якур.** Çимеллеччĕ...

**Староста.** Пурте умра-çке, Якур пичче... Ĕнтĕ каясчĕ...

**Якур.** Вăхăт çитнĕ тĕк, каяс пулать...

(Пурте сĕтел хушшинчен тухса сăхсăхаççĕ. Микула Павăл патне пырса урине салтса ярать. Çав вăхăтра Якур кĕтесри турăша илсе сĕтел пуçне ларать. Павăл Якур умне чĕркуçленсе тăрать.)

**Якур** (*иккунпа Павăл пуçне хĕреслесе*). О, воспоти помилуй... Тур папайран кун-çул килтĕр. Мана тирпейлесе пытарма çавăрса килтĕр. (*Павăл турăша чуптусан, тăрать, Анукпа пĕрле ытти хĕрарăмсем те ĕсĕклесе макăрни илтĕнет. Микулапа Семен Павăла пиншак тăхăнма пулăшаççĕ. Павăл сăвă каласа юрлама пуçлать. Пĕр çамрăкĕ тальянка купăсне калать.*)

Шур чăланта шур часси—
Çапас вăхăт çитрĕ-çке.
Ай аттеçĕм, Анукçăм,
Каяс вăхăт çитрĕ-çке.

* * *

Çинçе сырма тĕтреллĕ,
Нумай тăмасть, халь сирлет.
Ай аттеçĕм, Анукçăм,
Нумай тăмастăп, халь каяп.

* * *

Çинçе сырма урлăшне
Сиксе каçса пулмарĕ.
Çакă салтак нуштинчен
Хăтăлса-юлса пулмарĕ.

(Мĕкĕте кĕрет. Сукнапа тулласа çĕленĕ пĕрмеллĕ кĕрĕк тăхăннă. Пилĕкне сарлака хĕрлĕ хăмач пиçиххи сыхнă. Уринче сăрлă çăматă.)

**Мӗкӗте** (*кӗрсенех сӑхсӑхса пуҫ таять*). Кӳрӗш-кӳпе ӑсатма килес...

**Якур.** Килӗрех, килӗрех Мӗкӗте Михайлӑч... Кин, сӑра тултарса парасчӗ-ҫке... Павӑл, эрех тултар-ха, ачам...

(Анук сӑра тултарса пырать. Павӑл эрех тултарса парать.)

**Мӗкӗте** (*пӗр аллине эрех черкине тытса тепринпе кӗрӗк кӗсъинчен хут укҫа кӑларса парать*). Кӑваккинех парса яратӑп. Герой пулса таврӑн. Пирӗн ял ятне ан ҫӗрт. Патшашӑн, тӗншӗн тӑрӑш! А-а... Килтисем ҫинчен шухӑшласа кӑмӑлна ан хумхат. Ялта хам пур чух, никам та аптрамӗ. Пурне те ырлӑх кӑтартма тӑрӑшатӑп. Хӑйсем килӗшеҫҫӗ пулсан, аҫупа Ваҫли валли, пурин валли те ӗҫ тупса парӑп...

**Якур.** Тем пекехчӗ, Мӗкӗте Михайлӑч.

**Староста.** Мӗн калаҫнипе ҫитӗ, каяс ӗнтӗ...

(Павӑла Микулапа Семен каялла пӑхтарса ҫавӑтса, уттараҫҫӗ. Павӑл юрласах тухса каять.)

Шурта шур шывӗ типес ҫук,
Хур кӑвакал тытма ҫук.
Ман куҫран куҫҫуль типес ҫук,
Алран шур тутӑр татӑлас ҫук.

ЧАРШАВ.

## Иккӗмӗш картина

Уничере. Пус хапхи пур. Пӗр енче шӑнкрав сасси. лаша тулхӑрнӑ сасӑ, унтан ӳсӗр ҫын хаяррӑн, ӑнланмалла мар урмашса юрлани илтӗнет. Пус хапхи енчен, купӑс каланӑ хыҫҫӑн, Павӑл юрласа килнӗ сасӑ ҫывхарать:

Ҫӳлелле пӑхрӑм тӑлӗнтӗм
Кайӑк хур карта ҫавӑрнинчен.
Хам ҫинелле пӑхрӑм тӗлӗнтӗм
Ҫамрӑк ӗмӗр иртнинчен.

(Пус хапхинчен Павӑла ӑсатса тухаҫҫӗ. Ӑсатакансен хушшинче Анук, Укахье, Якур, Семен, староста, Микулапа Семен, Павӑла каялла пӑхтарса ҫавӑтнӑ. Павӑл сиксе-сирпӗнсе юрласа пырать. Пӗр ҫамрӑк купӑс калать.)

Пусӑ варӗнчи хурамин
Ҫулҫи ӳпне вӗҫсе ӳкрӗ:
Манӑн ырӑ курасси—
Ӳпне выртса макрасси.

Ҫинҫе ҫырма—шерпет шыв
Юхрӗ анчӗ Элнетпе.
Манӑн куҫри вӗри куҫҫуль
Юхрӗ анчӗ пит ҫине.

* * *

Элнет кукӑрӗ ҫич кукӑр
Ҫич кукӑрта хура ҫырла.
Хура ҫырлана хурт ҫирӗ,
Ман телее йыт ҫирӗ.

**Староста.** Мĕн ăсатнипе çитĕ... Лав çине лăратпăр...

**Павăл.** Ма питехваскатăн, Трофим Васильч? Яла çĕклесе каясран хăратăн-и?.. Е? Тухса каяччен, кăларса ярассăн сунмарăн-и мĕн? Ан хăра, Трофим Васильч... Ялĕ те вырăнчех тăрса юлĕ... Эпĕ те кайăп...

**Староста.** Уншăн каламаççĕ сана, Павăл. Çынсем паçăрах карĕç. Кая юлнине уретник пĕлсен, сана та, мана та аван мар пулĕ.

**Якур.** Чим-ха, ял евĕрлĕ пултăр, Трофим Васильч... Каймалла пулнă япала — каятех ĕнтĕ вăл. Ваттисен йăлине тусах пĕтересчĕ... Павăл, укçа ывăт-ха, ачам...

**Павăл.** Укçа-тăк—укçа... (*Кĕсъинчен укçа кăларса ывăтать.*) Орел! (*Укçа çĕре ӳксен укçа ӳкнĕ çĕрелле каять. Çынсем те ун хыçĕнчен кĕпĕрленсе пыраççĕ.*)

**Павăл** (*çĕрти укçана илсе*). Орел!.. Каларăм орла майлă ӳкет тесе... Пурĕ-пĕрех каялла сывă таврăнатăп.

**Якур.** О, воспоти помилуй, ачам... темпекехчĕ...

**Укахье** (*Анука йăпатма тăрăшса*). Питех ан хуйхăр-ха, тусăм... Телей пур сирĕн, веç ав, укçи те орла май ӳкрĕ...

**Павăл.** Сывă пул, атте... (*Якура ыталать.*)

**Якур** (*йăшак сасăпа*). Тур папай пиллетĕр, ачам... Ӳстертĕм, ӳстертĕм тарăхса... Ватăлсан хама канăç пулĕ тесе... Вилсен

тирпейлесе пытармалăхнĕ тесе... Пулмарĕ пулĕ...

**Павăл.** Каçар, атте... Пуранна чух çилентерни те пулчĕ-и тен...

**Якур.** Тура каçартăр, ачам.. О, воспоти помилуй... Çӳренĕ çĕрте пирĕншĕн ытлашши хыпса-çунса ан пурăн. Эпир кунта килте.. Мĕнле те пулин йӳнеçкелĕпĕр...

**Павăл.** Анук... (*Ыталашаççĕ.*)

**Анук.** Ах, Павăл... уйăрăлмалăх мар, курмалăх та пурнаймарăмăр-çке...

**Павăл.** Ан макăр, Анук... Пурĕ-пĕрех таврăнатăп... Куран акă, нумай та тăмăп, каялла таврăнăп! (*Анукран хăпса Ваçлине ыталать.*) Чипер юл, шăллăм... (*Асатма тухнă халăхпа чуптуса сывпуллашсан.*) Тăвансем!.. Ял-йыш!.. Мана хисеплесе ăсатма тухнăшăн тавтапуç сире... Сывă пулăр та пур пулăр!.. (*Юрлама пуçлать.*)

Урама тухрăм—тайăлтăм,
Тăвансенчен уйрăлтăм.
Пусса тухрăм—тайăлтăм,
Ял-йышсенчен уйрăлтăм.

Эпир каяс çул çине
Шăпăрпа шăлса хывнă пуль,
Эпир таврăнас çул çине
Тимĕр карта тытнă пуль.

(Юрла-юрлах, шăнкрав илтĕннĕ еннелле тухса каяççĕ.)

**Староста сасси.** Çуна çине лар часрах! Лар!..

**Ямшăк сасси.** Ну-у!.. Эккей!

**Анук.** Ан илсе кайăр-ха!.. Ах, Павăл... (*Юр çине кĕрĕс йăванса кайса сасăпа макăрать.*)

**Якур.** О, воспоти помилуй.. Туррăн ирĕкĕ, кинĕм. Ытлашши макăрса хăна-ху ан ват... Туррăн пиллĕхĕ пулсан, чиперех таврăнĕ-ха... Атя, киле каяр ĕнтĕ. Сивĕ юр çинче выртса пăсăласран хăрушă...

**Семен** (*хапха тăрне хăпарса кайнă ,кăшкăрать*). Павăл!!! Петĕ-ĕр! Çăкăр сăмси киле юлнă, çăкăр сăмсине çиме таврăнă-ăр!!!

ЧАРШАВ.

## Виççĕмĕш картина

Якур пӳртĕнче. Çĕрле. Хăй чикки вăйсăррăн çунса тăрать. Урамра çил-тăман тискеррĕн улани илтĕнет. Якурпа Васли кăмака çинче, Анук сарлака сак çинче,— выртаççĕ.

**Якур** (*самай вăхăт иртсен тепĕр майлă çаврăнса выртса*). О, воспоти помилуй...

**Анук.** Эсĕ те çывăрман-и, ати?

**Якур.** Темĕн ыйăх килмесĕр хăшкăлтăм-ха... Çил-тăман пек вăркать ăшчик... Павăла ăсатнă хуйăх та çитнĕччĕ... Тата Кĕркури кăмăла хуçса хăварчĕ.

**Анук.** Пуçтах çын курнать вăл...

**Якур.** Улмуҫҫинчен улми аякка ӳкмест теҫҫӗ. Елӳҫ кӗрӳ те ҫавнашкалахчӗ... Хӑй пуҫтаххипех пӗтрӗ. Ҫӗпӗртен таврӑнаймарӗ...
**Анук.** Мӗн туса лекнӗ вара вӑл Ҫӗпӗре?
**Якур.** Ҫак, хамӑр чиркӗве лартнӑ ҫул пачӑшкӑ валли пирӗн ялӑнне ҫӗр касса илчӗҫ. Ҫулла утӑ ҫулма ансассӑн, пирӗн Елӳҫ кӗрӳ, эпӗ хам тӳпене никама та памастӑп тесе, пачӑшкӑна виҫсе панӑ ҫарана ҫулать те каять. Лешӗ вара стражник илсе килет... Елӳҫ кӗрӳ ҫулнӑ утта тытса илме хӑтланать. Стражникӗ Елӳҫ кӗрӗве ҫапса янӑ, тет. Тӳсеймен вара, кӗрӳ стражникпе пачӑшкӑна иккӗшне икӗ хул айне хӗстернӗ те Элнете кайса янӑ. Вӑл иккен хӑратасшӑн ҫеҫ пулнӑ, анчах пачӑшкӑ, ишме пӗлменскер, чӑннипех путнӑ. Ҫавӑнтан кайран вара юланутлӑ стражниксем килсе тытса карӗҫ... О, воспоти помилуй...
**Анук.** Апла иккен...
**Якур.** Ку та хӑй ӗмӗрне ыррӑнах ирттерес ҫук.. Ытла та хӑюллӑ... Ма прехxутчен ҫав хӑрушла сӑмаха каларӗ-ши? Тен, ӑшӑ пӳртре канасси килетчӗ-и? Ҫын пек калаҫнӑ пулсан, каҫа хирӗҫ тухса та каймӗччӗ. Хамӑн та ҫав, хирӗҫме кирлӗ марччӗ. Темле пулсан та, хамӑр пӗлӗш...
**Анук.** Ҫанталӑкӗ ытла тискер тӑрать. Ҫул ҫӳремелли ҫанталӑк мар...
**Якур.** О, воспоти помилуй...

(Шăпланса выртаççĕ. Самай вăхăт иртсен çенĕхе шакканă сасă илтĕнсе каять).

**Анук.** Ати! Çенĕх алăкне шаккаççĕ мар-и çавăнта?

**Якур.** Кам çӳретĕр вара çак тискер сĕмкаç?

(Татах шаккани илтĕнет.)

**Анук.** Шакаççĕ, ати. Кĕркури пăяхам каялла таврăнмарĕ-ши?

**Якур.** Темĕн.

**Анук.** Тухса уçас пуль.

**Якур.** Вырт, вырт, хам уçатăп.

(Кăмака çинчен анса тула тухса каять. Нумай та тăмаççĕ, пӳрте стражникпе староста кĕреççĕ. Вĕсен хыçĕнчен Якур алăка хупса кĕрет.)

**Якур.** Килĕрех, Иван Митрич... Тĕпелерех иртĕр-ха...

**Стражник.** Тĕпеле иртсе тăма туя килмен эпир. Ĕçпе килнĕ.

**Якур.** Тем ĕççĕ тата?

**Стражник.** Морев ăçта карĕ?

**Якур.** Морев?

**Стражник.** Палламастăн-им мĕн?

**Якур.** Воспоти помилуй, Иван Митрич... Хам кĕрӳ ачине пăллатăп та-ха... Анчах, ăçталла тухса карĕ-ши çав? Те Чулхулана каятăп терĕ... Нимне пĕлмесĕрех тăрса юлтăм.

**Стражник.** Ăхă?.. Нимĕн те пĕлместĕр эппин?.. Юрать... А мĕншĕн пит васкаса тухса карĕ вăл?



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

**Якур.** Уна та калама пултараймастăп çав, Иван Митрич.

**Стражник.** Ăхă? Ăна та калама пултараймастăн эппин? Юрать. Апла пулсан, Морев сан патăнта мĕн çинчен калаçнине те манса карăн пуль?

**Якур.** Чăнах, мĕн çинчен калаçрĕ-ха вăл?

**Стражник.** Якур пичче, акă мĕн? Эсĕ пĕлмĕше персе тăнине итлеме килмен эпир. Морев кунта мĕн калани çинчен пĕтĕм ял пĕлет.

Якур. Чăнах пĕлмĕше персе мар, Трофим Васильч. Ху пĕлен, ман паян ахаль те тăн-пуç чистах сапаланса кайнă. Кам мĕн каланине те астумастăп...

**Стражник.** Астумастăн пулсан, акă, ме! (*Чыша йăвантарать. Анук хăранипе кăшкăрса ярать. Васли сиксе тăрать.*)

**Стражник** (*Анукпа Васлине*). Молча-ать!

**Якур.** Мĕнле хăян эсĕ ман çине алă çĕклеме? Эпĕ çирĕм пилĕк çул чунтан парăнса аслă патшана служит тунă... Эпĕ салтак!

**Стражник.** Салтаки-ха эсĕ? (*Тепре чыша йăвантарса ярать.*)

**Якур.** Снавая калатăп, Иван Митрич!

**Стражник.** Молча-ать!!! Сукин сын! Служба пĕлместĕн! Трофим Васильевич, шыра!

(Староста сакайне кĕрсе каять. Стражник сарлака сакайне уçса пăрахса шырать. Тумтирĕсене салатать. Шырасан-шырасан староста сакайĕнчен тухать.)

**Староста.** Нимӗн те ҫук. Иван Дмитрич!
**Якур.** О, воспоти помилуй!
**Стражник.** Молчать!

ЧАРШАВ

## Тӑваттӑмӗш картина

Якур пӳртӗнчех. Анук кутамка ҫӗтӗкӗ сапла-сапла хурлӑхлӑн юрлать.

Хӗвел тухать те ларать,
Ҫутти пӗрре те курӑнмасть.
Ир пулать те каҫ пулать,
Ман чун пӗрре те савӑнмасть.

Кантӑкран пӑхрӑм, шӑхӑртӑм,
Йывӑҫ тӑррине хумхатрӑм.
Шухӑшларӑм, макӑртӑм,
Вӗри куҫҫулӗ тӑкрӑм.

(Пӳрте Ваҫли чупса кӗрет. Аллинче пӗр мӑшӑр пысӑк, ҫӗтӗк ҫӑпата пур.)

**Ваҫли.** Шыраман вырӑн юлмарӗ, инке! Пӳрт тӳпинчен пуҫласа пусма айне ҫитичченех пӑлхатрӑм. Пӗр пушӑт татӑкӗ те юлман.

**Анук.** Мӗн тӑвӑпӑр-ши апла пулсан? Ҫӗтӗк ҫӑпатапа каясси-ҫке.

**Ваҫли.** Тӗлӗнтеретӗн эсӗ, инке. Мӗн кайманни пур унта... Ҫӑпата ҫӑпатах мар-и вӑл? Хуть те питти пултӑр, хуть те ҫӗтӗкки... Ҫурхи шыв уяса тӑмӗ. Акӑ, ҫакӑн ҫин-

ченех тепĕр мăшăрне те сыратăп та, пӳшмак-калуш пулса лартăр. Ельбох инке, урана пĕр тумлам шыв витес çук. (*Сырнă çăпата çинченех тепĕр çăпатине сырма пуçлать.*)

**Анук.** Икĕ хут çăпата сырсан, утса çитеймĕн!

**Vaçли.** Эпĕ çитейместĕп-и? Ан култар, инке! Акă, пăх-ха! Çитейместĕп-и? (*Ташланă пек тукаласа сиккелет. Якур кĕрет. Михĕпе çур пăт пек çăнăх йăтнă.*)

**Якур.** О, воспоти помилуй, ачам... Мĕн савăнăçшăн ташлан?

**Анук.** Ывăлсемĕн мĕн унăн, шӳт тăвассиех пĕтмест.

**Vaçли.** Шӳт туса мар, атте, ельбох та калатăп. Инке мана утса çитейместĕн тет, эпĕ—çитетĕп, тетĕп.

**Якур.** Качака пек сиккеличчен, канасчĕ хуть. Каймалла теççĕ.

**Анук.** Кутамккана апларăм эпĕ, ати.

**Якур.** Сапланă пулсан, юрать, кин. (*Миххине сарлака сак çине пырса хывать.*)

**Анук.** Ати, каймасан юнеçейместпĕр-ши? Çĕр типсен акă, пурте ĕçе кĕрĕшетпĕр. Халь çанталăк ытла та сивĕ-çке... Çурхи шыв шĕл кăварпа пĕрех... Кантур тĕрминче ларса ваннă сурансем те тӳрленеймен пулĕ-ха...

**Якур.** Каяс пулать, кин... Мĕнле те пулин тӳскелĕпĕр унта. Ĕçе каймасан, юлашки çур

пăт юлать, терĕ. Павăла парса янă пилĕк тенке те шырать.

**Анук.** Ара, кучченеç пулать тесе пачĕ-çке вăл.

**Якур.** Мĕн кучченеçĕ унта... Çын умĕнче ыр ятлă пуласшăн çеç айкашнă вăл.

**Анук.** Выç кашкăр темерĕн...

**Якур.** Ĕмĕрех çапла, кин... Ĕлĕк, атте вилсен, пытарма тесе пилĕк тенкĕ кайса илтĕмĕр те, проччăншăн çурпилĕк анине туртса илчĕ. Çав çулах анне вилсе карĕ. Тепĕр çурпилĕкне патăмăр. Тăлăха юлсан авланмалла пулчĕ. Юлашки çур пилĕке кайса пама тиврĕ. Çавăнтанпах пĕр татăк çĕрсĕр пурăнатпăр. Эпир çеç-и вара?.. Ялĕпе Мĕкĕте кусĕнчен пăхса пурăнаççĕ. Вилли-чĕррипех тирсене сĕвсе пурăнать. Хăвачĕ çитес пулсан, хĕвеле те хăйшĕн çеç пăхтарĕччĕ. О, воспоти помилуй.

(Укахье кĕрет.)

**Анук.** Килях, тусăм.

**Укахье.** Килтĕм-ха...

**Якур.** Ивансем кайма тухрĕç-и-мĕн?

**Укахье.** Тухас теççĕ. Мана сире калама ячĕç.

**Якур.** Апла пулсан,васкас, кин...

**Анук.** Халех, ати... Çак аçам пеккине те пулин чиксе парса ярам-ха. Çаралла вырт ниех пулмĕ.. (*Çĕтĕк аçам пеккине кутамкана чикет.*)

**Якур.** О, воспоти помилуй...

**Укахье.** Павăлран ним сас хура та çук-и?

**Анук.** Кайсанах пĕр çырў янăранпа ним хыпар та çук.

**Укахье.** Çапла çавă... Вăтакасри Хĕветĕрĕн те хыпарĕ çук тесе пурăнатчĕç те,.. Халь, вилнĕ тесе пĕлтерчĕç тет.

**Якур.** О, воспоти помилуй...

**Анук.** Пирĕн те пурриех мар ĕнтĕ вăл... Ытла та ним сасхурасăр пурăнать... (*Кутамкана Якур хулпуççийĕ çине çакма пулăшать. Турăш умне тăрса сăхсăхаççĕ.*)

**Якур.** Карăмăр... Чипер пурăн, кин...

**Укахье.** Хамăр патра пырса лар, тусăм. Пĕччен чухне пушшех те чун хурланать вăл...

**Анук.** Эпĕ пыратăп-çке унта... Ху килсе лар, тусăм.

**Якур.** О, воспоти помилуй...

(Пурте тухса каяççĕ. Самай вăхăт иртсен, Анук каялла кĕрсе сўс арлама ларать. Сăвă каласа юрлама пуçлать.)

Ăçтан тухрĕ çавра çил
Сар чачеке силлеме?
Ăçтан тухрĕ хăрушă вăрçи
Çамрăк пуçа пĕтерме.

Аслă çул урлă каçнă чух
Яштак хурăн хумханчĕ.
Павăл тухса кайнă чух
Яштак пĕвĕм хумханчĕ.

Яштак хурăн хумханать,
Хумханма мар хуçлĕ-ха.
Ман çамрăк чун хурланать,
Хурланма мар хуçлĕ-ха.

Ӳсессине ӳсрĕмĕр
Кантăр çинчи пуса пек,
Сая каясса каятпăр
Выльăх çимен курăк пек.

Шăнкăр уяр пулмасан
Эпĕ санталь тăхăнас çук.
Чул çине курăк шăтмасăр,
Павăл, сана манас çук.

(Юрлама чарăнса шăппăн ларать. Урамран Мĕкĕте юрă антрашса кĕнĕ сасă илтĕнме пуçлать).

Ехал из ярмарки ухарь купец,
Ухар купец—удалой молодец.
Трю-ля-ля-ля-ля, трю-ля-ля-ля-ля!
Ухарь купец—удалой молодец.

**Анук** (*хăранă пек пулса*). Мĕкĕте-çке ку... Мĕн тума килет вăл кунта?..

**Мĕкĕте** (*пӳрте юрласах кĕрет. Ӳсĕр*).

... Трю-ля-ля-ля-ля, трю-ля-ля-ля-ля!
Пей, пропивай, наживем-проживем.

**Анук** (*хăюсăрлансарах*). Килях...

**Мĕкĕте**. Çапла кала çав, хĕрĕм... Пĕлен, эпĕ кам?.. Эпĕ—купца! Мана тĕнчере пĕл-

менни никам та çук. (*Анук патнелле пырать.*)

Анук (*ура çине тăрса*). Мĕн кирлĕ сире, Мĕкĕте пичче?

**Мĕкĕте.** Нимех те мар, хĕрĕм... Сĕм-сĕм вăрман хушшинче мăкăнь чечекĕ сарăлса ларать тенĕ хыпар пур. Мăкăнь чечекĕнчен шерпет шыв туса хатĕрленĕ теççĕ. Пĕр тумлам та пулин тутанса пăхма май çук-ши? Çул пыранăн чĕри савăнтăр.

**Анук.** Чăрманас мар, шерпет шывăн хуçи пур.

**Мĕкĕте.** Кам-ши вăл манран чаплă хуçа? Кам-ши вăл манран хаклă тӳлеме пултаракан хуçа?

**Анук.** Турă пӳрнĕ савнă тусăм, Мĕкĕте пичче.

**Мĕкĕте.** Турă пӳрни?.. Пĕтĕмпех суя? Турă пӳрни, акă, кунта вăл, кĕсъере! (*Кĕсъинчен вăрăм кӳшелкепе укçа туртса кăларса, путмар çине ывăтса ярать*). Мĕкĕтен кăмăлĕ уçăлнă пек чух, пĕтĕмпех сан!.. (*Анука тытма хăтланать.*)

**Анук.** Эсир мĕн, чухăн çын тесе, кулма кĕтĕр-и?

**Мĕкĕте.** Кулас тĕлĕшĕ çук, хĕрĕм... Ан хăра манран... Ват юман та хĕвел çутине юрататать. Сарă хĕвелпул маншăн, хĕрĕм. Сахал тесен, татах паратăп... Нимĕн те шелле-

местĕп. Ман мĕн пурри пĕтĕмпе сан пултăр... Сав мана, хĕрĕм.

**Анук.** Ирсĕр, выльăх темерĕн... Тухса кай кунтан! Ман тасалăха, сан пуянлăху мар, ху мĕнĕпе те тăмастăн эсĕ! Кăмăлпа хĕвел çутине ылттăнпа илеймĕн...

**Мĕкĕте.** Пит аван. Ылттăнпа илейместĕп пулсан, ахалех ман пулать. Йўнерех ларĕ... (*Анука тытма хăтланать.*)

**Анук.** Ан çывхар, выç кашкăр! (*Алăк патнеллех тарма хăтланать.*)

**Мĕкĕте** (*алăк çине тĕрĕнсе тăма ĕлкĕрсе*). Ăçта талпăнан? Сурăх кашкăр çăварĕнчен хăçан тарса хăтăлни пур?

**Анук.** Асту, вара... Çухăратăп!

**Мĕкĕте.** Çухăр! Хытăрах çухăр! Кам килсе Мĕкĕтене чăрмантарма хăйĕ, курăпăр!

ЧАРШАВ.

## Иккĕмĕш акт

Вăрман. Элнет шывĕ хĕрринче. Шывра сулă ларать. Сулă çинче хăмаран çапса тунă кăшшавуй. Кăшшавуй çивиттри çумĕнче пакурсене тĕрентерсе тăратнă. Кăшшавуй вăтаçĕрĕнче вучах. Вучахри вут сўннĕ. Тăрăхла сак çинче бурлаксем эречкипе çывăраççĕ: пĕр хĕрринче Микула, Иван, Якур тата Семен. Çĕтĕк аçамсемпе, шăналăкпа витĕннĕ. Сулă çинчен çырана утса тухма хăма хывнă. Çыран хĕрринче апат пĕçермелли пысăк хуран çакăнса тăрать Хуран тавра: витре, тирĕк-чашăксем, яшка ăсмалли авăрлă курка выртаççĕ. Хуран çывăхĕнче Васли тĕршĕнсе выртать. Унпа юнашарах вут мук-

лашкисем пур. Микулапа Иван хӑйсем ҫине витӗннӗ аҫама пӗрин ҫинчен тепӗри туртса илме хӑтлапса иккӗшӗ те вӑранаҫҫӗ.

**Иван** (*чӗтресе*). Ы-ых! Тӳсмелле мар шӑнса выртнӑ...

**Микула.** Эпӗ те ҫуна тупанне хытӑ аврӑм кӗҫӗр. Ҫанталӑкӗ те ҫӑва пек сивӗ. Те хӗллехинчен ирттерес тет...

(Иван вучах айккинче выртакан вут муклашкисене пуҫтарать. Ҫав хушӑра ҫӗрте выртакан хут татӑкӗсем тупса иле-иле кӗсъине чикет. Микула вучахри вутта чӗртсе яма тӑрӑшать.)

**Иван** (*вучах патне пырса*). Пахӑлькке памарӗҫ, шуйттан пуҫӗсем...

**Микула.** Пире пахӑлькке илсе парас пулсан, хӑйсем те ҫакӑнса вилеҫҫӗ вӗсем... Хут пур-и сан? Кӳр-ха, тапак туртса ярар луччӗ.

**Иван.** Хут хамӑн та пӗтнӗччӗ те, халӗ, вут пуҫтарнӑ чухне тупрӑм... Ме... (*Кӗсъинчен хут татӑкӗ кӑларса парать.*)

**Микула.** Тем, ахаль хут мар пулас ку.

**Иван.** Кирлӗ хут пулсан, ҫӗре пӑрахса ҫӳремӗччӗҫ. Тапак чӑркама тачкарах та, ҫук чухне пырӗ-ха.

**Микула.** Туртма мар, вуласа пӑхасчӗ... Рабочисем халӑх хушшине хут сараҫҫӗ теҫҫӗ... Ҫав хут мар-ши?

**Иван.** Чӑнах, эпӗ аса та илмен ӑна... Чекалкина вулаттарӑпӑр. (*Каялла кӗсъине чикет.*)

**Микула.** Тӗрӗссипе каласан, Чекалкин сӑмахӗсем кӑмӑла каймаҫҫӗ манне. Вӑл чӗререн калаҫать тесе те ӗненес килмест. Мӗн сӑмах вӑл: „Ан васкӑр! Мул хуҫисем хӑйсемех халӑха парӑнӗҫ“, тени?

**Иван.** Ара, хамӑр ҫынсене пысӑк вырӑна суйласа лартсан, пурнӑҫа улӑштаратпӑр терӗ-ҫке...

**Микула.** Тахҫан тем те пулӗ те-ха, халь акӑ, ҫӗҫӗсӗрех пусаҫҫӗ. Ӗнсе тымарӗсем таталасси ҫинче ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ ӗнтӗ. Тата Яппунне ҫӗнтерме парне ыйтаҫҫӗ. Мӗн тума кирлӗ пире вӑрҫӑ?

**Иван** (*хӑраса*). Ерипен эсӗ... Такам илтес пулӗ. Тем курса ларӑн.

**Микула.** Ҫак тӗксӗм, сивӗ каҫра такам илтесси пур?..

**Иван.** Пӗлме ҫук: хир куҫлӑ, вӑрман хӑлхаллӑ теҫҫӗ.

**Микула.** Илтеҫ-тӗк, илтчӗр тепӗр тесен. Ҫӑва шӑтӑкне кайса ярсан та хальхинчен йывӑр пурнӑҫ курас ҫук. Акӑ, каллех ӗҫ пӗтсе ҫитрӗ. Тата ик-виҫ затор ватсан, йывӑҫсене вырӑна юхтарса ҫитеретпӗр. Расчутра пурпӗрех укҫа тухас ҫук. Каллех выҫӑ тӑрса юлатпӑр.

**Иван.** Чекалкин тепӗр ӗҫ тупса пама тӑрӑшӑп терӗ вӗт-ха. Ҫук, Микула, эсӗ ахалех Чекалкина шанмасӑр калаҫатӑн. Чекалкин

пек аван çын, пирĕншĕн тăрăшакан прикащик урăх тупаймастпăр эпир.

**Микула**. Асту, пирĕншĕн тăрăшса пирĕн пек выçă лармасть-и вăл?

**Иван**. Кам пĕлет? Пирĕн майлă пулса ĕçлесси çăмăл ĕç мар. Хуçасенчен те хăрас пулать, полицисем пĕлесрен те хăрушă.

**Микула**. Хуть те тем каласан та, Чекалкин ман кăмăла каймасть. Вот Морев сăмахĕсем халĕ те чĕрене хумхатса тăраççĕ. Мĕн терĕ вăл, астăватни? Этем пуянпа чухăна уйрăлса тăрассине пĕтермесĕр вăрçă пĕтес çук, терĕ. Патша вăл...

**Иван**. Кай, ан тапрат çавна тек! Чиперех Çĕпĕре çакланса ларăн санпала...

**Микула** (*ирĕксĕр кулса*). Арăму тăлăха юласран хăратни?

**Иван**. Мĕн кулан? Хăратăп çав... Арăм пур çав ман. Эсĕ, Морев кусси кусса, хун валли лайăхах тупăн-ха.

**Микула**. А тупсан мĕнех вара? Çылăхлă çыншăн тамăк хăрушă мар.

**Иван**. Господи Исуссе! Тем çылăха кĕрсе ларăн санпала. Пĕр-ырă сăмах та тухмасть сан çăварунтан.

**Микула**. Ырри леш тĕнчере...

**Иван**. Кай, ан калаç... (*Вучах патĕнчен кайса Якур патне пырать.*) Якур пичче, шăнман-и эсĕ? Якур пичче! Вучахра вут çунать, тăрса ăшăн... Эй, Якур пичче... (*Тĕк-*

*келесе вăратма тăрăшать*). Якур пичче, Якур пичче... Мĕн пит хытă çывăрать) вара ку?.. (*Якур çинчи açама сирсе пăхать*). Микула, кил-ха!..

**Микула.** Мĕн пулнă тата? Çывăрать-тĕк, çывăртăр. Тăмасть пулсан, питех шăнман пуль-ха...

**Иван** (*Якур сывланине итлесе*). Кил-ха часрах! Темĕн, сывлани илтĕнмест-çке унăн...

**Микула.** Пулмĕ?.. (*Васкавлă пырса Якур аллисене тытса пăхаççĕ. Сывланине итлеççĕ.*) Тыт-ха, часрах... вучах умне илсе каяр.

(Микулапа Иван Якура вучах патне йăтса пырса вырттараççĕ. Вăратма хăтланаççĕ, анчах Якур ним сиккелемесĕр выртать.)

**Микула.** Ак, сан валли ырлăх, Иван... Çĕр те, виç аршăн çеç кирлĕ...

**Семен** (*вăранса*). Эй-ха, вут çунать-çке унта! (*Вучах патне пырать, Якур выртнине курса.*) Ват çын ват çынах, чее: вучах кутне килсе выртма та ĕлкĕрнĕ. А эпĕ, уххаххи... Çĕр хута кăвакала петĕм.

**Микула.** Ерипен, эсĕ...

**Семен.** Ма?

**Микула.** Курмастăн-им, çын сывламасăр выртать.

**Семен.** Ан калаç... (*Чĕркуçланса ларса пăхать.*) А батюшки мой! Мĕн куратпăр, э? (*Çывăракан бурлаксене вăратма кăшкă-*

*рать.*) Эй, халăх! Тăрăр-ха, тăрăр! Ара, Васли ăçта çав? Васли!

**Микула** (*Çемене пÿлсе*). Мĕн кăшкăран? Ача сехрине хăпартас тетĕн-им? Ан тив, çывăртăр канлĕ... Унăн мĕн ырă курни те ыйăх çеç. Хуйхине ыйăхран вăрансан та курма ĕлкĕрĕ-ха.

(Бурлаксем вăранса сике-сике тăрăççĕ. Пурте шăннипе ĕнтĕркенĕ. Хăшĕ тăрсанах аллисемпе çапкаланса ăшăнма хăтлана ççĕ. Вучах умне пырса тăраççĕ.)

**Микула.** Хал ăх... Якур пичче вилсе выртнă...

(Пурте пĕр çĕре пухăнса шăп пулса тăраççĕ.)

**Иван.** Ăçтан тÿсейтĕр... Пахăлькке памаççĕ...

**Микула.** Тата нумайччен тÿсмелле-ши пирĕн ку хĕнхура?

(Мĕкĕте васкаса килет.)

**Иван** (*Мĕкĕте килнине пуринчен малтан курса.*) Ерипен, хăй килет...

**Микула.** Выç кашкăр вилĕ шăршине сиссе киле пуçларĕ...

**Мĕкĕте** (*тÿрех Васли патне пырса, Васлие тапать*). Эсĕ мĕн, çывăрса укçа илме килнĕ-и, йытă çÿри?

**Васли** (*шарт сиксе вăраннипе ним тума аптăраса хуран айĕнчи вутта вĕрме таппратать.*) Çунмасть тата вутти...

**Мĕкĕте.** Нумай çывăрнăшăн, аллă пус штраф сана!

**Васли** (*йăлăнса*). Мĕкĕте Михайлăч, чей вĕренĕ ман. Тархасшăн каçарăр. Ельбох та вĕренĕ...

**Мĕкĕте.** Тепре хăлха чиккинчен парсан, вара чей вĕремен пулать сан, антра пуçăн... Айта, чуп склада! Кăнтăрлахи апат хатĕрлесен те çитĕ!

**Васли.** Юрать, Мĕкĕте Михайлăч, халех кайса илетĕп... (*Чупса каять.*)

**Мĕкĕте** (*кăшкăрать*). Вставай на рабо-оту! (*Çынсем çывăрманнине курса*). Тăнă та-çке эсир! Эпĕ уссăрах кăшкăратăп мĕн. Кун пекех ир тапрансан, мухтама та тивĕç. (*Бурлаксем шарламасăр тăраççĕ.*)

**Мĕкĕте** (*Сулă çине кĕрсен Якур выртнине курса*). Ку кахалĕ мĕн туса выртать тата? (*Якура ура пуçĕпе тапса.*) Тăр, наххал, йытă!

**Микула.** Тап, тап.. Хытăрах тап, Мĕкĕте Михайлăч. Тапса-чышса юл. Урăх тапаймăн та, чышаймăн та эс ăна... Аранах сан ирĕкрен хăтăлчĕ вăл, ĕмĕрлĕхе...

**Мĕкĕте.** Мĕн терĕн эсĕ, мĕн пулнă?

**Иван.** Якур пичче канлĕх çĕрне куçнă...

**Мĕкĕте** (*сăхсăхса*). Чунĕ çӳлти патшалăхра пултăр. Уринчен чул çыхăр та, тарăнтарах çĕре кайса ярăр...

**Семен.** Тĕне кĕнĕ çын-çке вăл, Мĕкĕте Михайлăч. Чиркӳллĕ ял та инçех мар кунтан. Ваттисен йăлипех тирпейлесе пытарасчĕ.

**Мĕкĕте**. Хăвăр шут çинчен пулсан, кирек мĕн тăвăр. Кашни вилĕшĕн расхутлансан, ман çӳç пĕрчи те çитес çук. Якур мана ахаль те парăмлăччĕ-ха вăл...

**Микула**. Халăх, кам каять? Ĕç пăрахиччен, Ĕшĕт ялне кайса вырттарасчĕ... Шăтăк алтса хатĕрлер, тупăк тутарас. Ĕç пĕтсен, кайса пытарăпăр...

(Икĕ çын Якура йăтса каяççĕ. Халăх шарламасăр пуçне тайса юлать.)

**Мĕкĕте**. Ну, çын вилнĕ тесе ĕçе каяссине манса тăрас мар. Тавай, пакурсене илсе тухăр!

**Микула**. Шурăмпуç килмесĕрех-и?

**Мĕкĕте**. Шурăмпуç килмен эппин? Хĕвел тухаччен çывăрттарас мар-и тата? Мамăк тӳшек сарса парас пулĕ? Чаплă çынсен аякĕсем ыратакан пулчĕç пулмалла.

**Семен**. Йĕкĕлтемесен те пырĕ, Мĕкĕте Михайлăч. Ĕçе кайма, эпир чей те ĕçмен-ха.

**Микула**. Ĕнер те, шăршлă пулă пĕçерсе панипе, кунĕпех выçă пурăнтăмăр.

**Мĕкĕте**. Вон чево? Чей, какай, така яшки кирлĕ сире? Килте хуран кукăлĕ çеç çисе пурăннă чаплă хуçасен хырăмĕсем пăсăлма та пултарĕç.

**Микула**. Килте какай яшки çисе курмастпăр тесе, кунта та выçах ĕçлес-и-ха ĕнтĕ?

**Мĕкĕте**. Чăнласа калаçас тăк, эсир мĕн, забастовка тăвас тесе шут тытрăр-и? Çĕпĕ-

ре каяс килчӗ-и сирӗн? Ну?! (*Халăх шарламасăр тăрать.*) Сирӗн, ӗççе-çиес шухăш çеç... Ӳпшер кукринче затор тунипе йывăç юхма чарăнни сирӗншӗн имӗн те мар. Часрах, эречкипе тăрăр та, ман сире пӗр-икӗ сăмах каласа пӗлтермелли пур.

(Бурлаксем пакурсене иле-иле çырана тухса эречкипе тăраççӗ.)

**Мӗкӗте** (*каярах юлнисене*). Эсир мӗн йăваланатăр унта? Ача çуратма тапраннă-и? (*Пурте çырана тухса тăрсан.*) Расчут парас вăхăт çывхарса килчӗ. Кайран юмах-сăмах ан пултăр тесе, çакна калас пулать. Вулăс кантурӗнче, ӗçукçи кунне утмăл пус пулать тесе, Карпов хуçа астумасăр каласа янă...

**Семен**. Мӗн, мӗн терӗн эсӗ?

**Микула**. Мӗнле астумасăр? Договор çине те çаплах çырнă-çке.

**Иван**. Договор çине те утмăл пус тесе çырнă.

**Мӗкӗте**. Вон епле?.. Договор çине утмăл пус тесе çырнине пӗлетӗр иккен? (*Кӗсъинчен хут кăларса Микулана тыттарать*). Акă, ме, пӗлен пулсан, вуласа пăх-ха... Çынсене те вуласа пар, пурте илтчӗр, мӗн чул тесе çырнă унта?

**Микула** (*хут татăкне юнашар тăракан бурлака парса*). Ӗçукçи утмăл пус пулать тесе, тиек хăй вуласа пачӗ пире.

(Хут татăкĕ алăран-алла çӳрет. Анчах никам та вулама пĕлмесçĕ.)

**Иван** (*хут татăкне Мĕкĕтене каялла парса*). Мĕнле вулăпăр эпир, пĕри те хут пĕлместпĕр пулсан?

**Мĕкĕте.** Вулама пĕлместĕр пулсан, çăвара кармалли те çук! Договор çинче те хĕрĕх пус тесе çырнă. (*Хут татăкне саркаласа çĕклесе кăтартать*). Акă, пăхăр-ха, „хĕрĕх пуспа килĕшетпĕр" тесе, хăвăрах хĕрессем, ункăсем туса алă пуснă, ăна кантурта пичет пусса крепитленĕ.

**Микула.** Айта, улталăрах... Сире нумай кирлĕ... Улталамасан хĕвел пăхать-и вара..

**Мĕкĕте.** Эп улталатăп-и?... Тăм пуçсем! Ултлама мар, ман хӳтлĕхпе çеç пурăнатăр эсир. Эп ĕç тупса памасан, тахçанах выçă вилеттĕрччĕ... Кам килĕшмест договорпа, кам шавлама юрататъ, халех киле кайма та пултаратăр! Расчутне те паянах паратăп. Ну?!.. Каяс текенсем пур-и?! (*Сăмах чĕнекен никам та çук.*) Каяс текен çук пулсан, тата çакна каласа парас. Иывăçа тинĕс урлă ярас ĕç начарланса килчĕ. Ют государствăри хуçасем йывăç хакне чакарса сутаççĕ. Пирĕн суту-илӳ чарăнсан, сирĕн те ĕç пĕтет. Çавăнпа ĕçукçине тата вунă пус чакаратпăр... Ентĕ ĕçлеме марш!

(Бурлаксем пуçа чиксе каяççĕ. Мĕкĕте те каять. Вăхăт нумаях та иртмест, бурлаксем ĕçле-ĕçле юрланă сасă илтĕне пуçлать.)

Элнет тулли шыв юхать—
Пирĕн куççуль мар-ши çав?
Элнет çинче ахлатни—
Пирĕн сасă мар-ши çав?

Харăс тĕкĕр суллине,
Хăвăрт хăптăр çыранран.
Пирĕн халсăр кăкăрсем
Хăтăлĕç-ши йăлмакран?

(Васли килет, михĕ йатнă. Пĕр аллинче çу кĕленчи пур.)

**Васли** (*миххе хуран умне лартса*). Фу-у... Йăлтах ывăнса çитрĕм... Малтан шывне çакса ярас-ха. (*Витре илсе сулă çине шыв ăсма кĕрет. Бурлаксем юрланă хыççăн юрлать.*)

Харăс тĕкĕр суллине,
Хăвăрт хăптăр çыранран.
Пирĕн халсăр кăкăрсем
Хăтăлĕç-ши йăлмакран?

**Сцена хыçĕнчи сасă**. Эй, тытăр! Тытăр! Хытăрах тытăр! Семен, тар!.. Йăвăç çапать! Астăвăр! Астăвăр! Карĕ! Карĕ!..

**Мĕкĕте сасси**. Кам унта ларни? Штраф!

(Халăх юрланă, шавланă сасă инçетре çухалать.)

**Васли**. Затора ватса ячĕç... Ха?.. Микула пичче пĕр пĕрене çине тăрса юхса карĕ... Ӳссен, эпĕ те затор ватнă çĕрте ĕçлетĕп. (*Юрла-юрла сулă çинчен тухать.*)

Айтăр каяр бурлака,
Ялта пурнăç çук пире.
Çыран тăрăх çÿресех
Ирттеретпĕр ĕмĕре.

(*Витрери шыва хурана ярать. Михĕри кĕрпене хуран çине силлет.*) Аранах шухăшланă пăттине çисе куратăп паян. Аттене çуллăрах туса çитересчĕ-ха. Темĕн, вырăс хуçа пит кăмăлланса кайнă паян. Вир кĕрпи, çу парса ячĕç. Хыт каçмак Мĕкĕти шыва путса вилтĕрччĕ вăл. (*Хуран айне вут хывса чĕртет те, айккинчи кĕлне туртса илсе çĕр çине сарать*). Çапла ая вĕри кĕл сарсан, ăшă пулаканччĕ-ха. (*Ула катка йывăçа шаккани илтĕнсе каять.*) Ха?! Катăршнăй пуçĕ... Кунтах шаккать... Паян тутлă пăтă пĕçернине ула катка та сиснĕ. (*Аллине çупса.*) Кăша-а!.. Вĕçсе ка-арĕ... Айй хÿхĕмскер. Тытса киле илсе каясчĕ. Вăт ачасене тĕлĕнтерĕттĕм! (*Выртать.*)

ЧАРШАВ.

## ИККĔМĔШ КАРТИНА

**Декораци çавах. Васли хуран патĕнче макăра-макăра юрласа выртать.**

Хĕртсе хĕвел пăхнă чух,
Хур чĕппине уйăрчĕ.

Пурнас, пурнас тенĕ чух,
Атте манран уйрăлчĕ.

Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен
Çакăнчĕ юлчĕ йăрхана.
Ай, аттеçĕм-аннеçĕм,
Тăратрăр хăвартăр тăлăха.

(Бурлаксем ĕçрен таврăнаççĕ. Вĕсемпе пĕрле Чекалкин та пур. Малта Иванпа калаçса пырать, Васли хурлăхлă юрланине курса, пурте чарăнса итлесе тăраççĕ. Васли çаплах юрлать.)

Ещĕк, ещĕк сар улми
Çиес мар тăк, пулас мар.
Ай, аттеçĕм-аннеçĕм,
Тăлăха хăварас-тăк, çуратас мар.

(Юрлама чарăнса лăпкăн макăрать.)

**Микула.** Мĕскĕн тăлăх-турат...

**Чекалкин.** Мĕн пулнă? Мĕншĕн çав териех хурлăхлă вăл ача?

**Иван.** Кĕçĕр ашшĕ вилнĕ унăн.

**Чекалкин.** Шел... Анчах ним тума... Çураласран хăтăлайманнине вилĕмрен хăтăлса юлас çук...

**Микула.** Чипер вилĕмпе вилнĕ пулсан, хуйхи пĕрччĕ... Вăхăт çитсен никам та вилесрен хăтăлса юлас çук. Куç умĕнчех шăнса вилни пурин кăмăлне те хурлантарать.

**Иван.** Вăл юрĕ те-ха ĕнтĕ... Пĕр вилсен, каялла чĕртес çук... Чĕрĕ юлнисен пурнăçĕ çинчен шутлас пулать. Макар Иванăч, çак

хута вуласа пар-ха, мĕн çырнă-ши унта, пĕлесчĕ... (*Кĕсъинчен хут татăкĕ кăларса парать.*)

**Чекалкин.** Мэ вуласа парас мар... Тархасшăн... (*Хăй ăшĕнче вулать.*)

**Семен.** Саспа вуласчĕ, Чекалкин тус.

**Иван.** Саспа вула, саспа, Макар Иванăч!

**Чекалкин.** Халех, тăвансем...

**Ваçли** (*халăх шавланине илтсе, хăраса вăраннипе сиксе тăрать.*) Ĕçрен таврăннă-çке, эпĕ тирĕк-чашăксем те хатĕрлеймен.

(Купаланса выртакан тирĕксене илсе салатса лартма хăтланать.)

**Микула** (*Ваçли патне пырса*). Ан тăрăш... Хамăр та илетпĕр. (*Ыталаса.*) Ан макăр... Ваçли... Мĕн те пулин.., Эпĕ те сан пекех çамрăкла тăлăха юлнă. Ман аттеке те паром туртма кайсан, Мĕкĕте шыва тĕртсе янă... Хăçан та пулин шăпи тулĕ-ха унăн... Халăх куççулĕ çĕре ӳкмĕ...

**Чекалкин** (*вулама чарăнса*). Ăçтан тупнă эсир ку хута?

**Иван.** Акă, çакăнтах сапаланса выртаççĕ...

**Семен.** Мĕн тесе çырнă?

**Чекалкин.** Ним çырниех те çук кунта. Кантур хучĕ ку. Каяннăй Микита Михалчă... Кирлĕ хутсенех сапаласа çӳрет те, кайран шыраттарса чуна илет. Кайса туп вара эсĕ... (*Хут татăкĕсене илсе кĕсъине персе чикет.*)

**Иван**. Тьфу! Хут пĕлмен япала тем хутне те пуçтарса чикĕн.

**Чекалкин**. Хут пĕлменни нимех те мар-ха вăл...

**Иван**. Ним марри мĕнни, Микула пирки пулчĕ: заводри рабочисем саракан хут марши, тет. Заводри рабочисем мĕн тăваççĕ-ши, пĕлесчĕ тесе, ăнран кайнă.

**Чекалкин**. Мĕн туччĕр пуль вĕсем? Ĕçлесççĕ те çиеççĕ. Çул çитсен—авланаççĕ. Вăхăт çитсен—вилеççĕ. Мĕн хучĕ сарччĕр вĕсем сирĕн хушăра? Мĕне кирлĕ эсир вĕсене? Рабочисен хăйсен çулĕ, сирĕн хăвăрăн... Асаилнĕ пек чух, эпĕ сире ырă хыпар пĕлтерме килнĕ, тăвансем! Хуçасемпе калаçса пăхрăм та, пурсăра та ĕç тупса паратпăр терĕç.

**Иван**. Ак, Микула, илтрĕн-и? Ĕç параççĕ, тет!

**Чекалкин**. Малтанах калаçасшăн та марччĕ вĕсем, анчах забастовка тапрататăп тесе хăратрăм. Вара хăйсемех çемĕçрĕç.

**Иван**. Илтрĕн-и? Мĕн калаççĕ ăслă çынсем?

**Микула**. Илтрĕм... Ырă хыпаршăн тавта пуç... Анчах ĕçлеме пит йывăр-çке. Акă, пăхха... (*Урисене çĕклесе кăтартать.*) Кунĕпе шывра ашса çӳресе пилĕк таранах шӳнĕ эпир. Çурхи шыв вĕт... Якур пичче тӳсеймерĕ ав... Тата, вăтăр пус улталарĕç.

**Семен**. Чекалкин тус, Микула пит те тĕрĕс калать. Пур енчен те çаратаççĕ. Мĕн тăвас пирĕн, ăс парччĕ.

**Микула.** Эсир ăслă çын, Макар Иванович... Хăвăра халăхшăн тăрăшакан çын, тетĕр. Çул кăтартса пар пире. Пирĕн кăмăлсем вĕри хуранти шыв пек вĕресе тăраççĕ. Эпир вута та, шыва та сикме хатĕр.

**Иван.** Микула, асту вара... ытларах калаçан эсĕ!

**Чекалкин.** Ырă сунан тăвансем! Шыва та сикме кирлĕ мар. Элнет юхтăрах вăл лăпкăн, хăй майĕпе. Вута сикес тени те айванла сăмах çеç. Вăхăт çитсен пурнăç хăех майланĕ. Акă, Государственнăй думăна хамăр çынсене суйласа лартатпăр та, çĕнĕ ĕмĕр çитĕ. Ирĕклĕ ĕмĕр. Пуянни, чухăнни, пурте пĕртан пулăпăр.

**Иван** (*Микулана*). Илтетĕн-и, мĕн калаççĕ ăслă çынсем?

(Тата икĕ-виçĕ çын Иван каланине хута кĕреççĕ.)

**Микула.** Морев апла каламастчĕ.

**Иван.** Микула!..

**Чекалкин.** Морев? Ăçта курнă эсир ăна?

**Иван.** Хĕлле... çав Якур пиччесем патне пырса кĕнĕччĕ... Кайран, казак-стражниксем яла килсе хăшкăлтарчĕç. Якур пиччене хăйне те çавăн пиркиех кантурта хытă çаптарчĕç.

**Чекалкин.** Тăвансем! Эсир Морев камне пĕлместĕр курăнать. Морев хăрушă çын. Моревпа унăн тусĕсем Раççейре анархи

пуçласа ярасшăн. Ĕмĕрхи харпăрхăйлăх йăлине çĕмĕрсе, этемĕн пĕтĕм пурлăхне вăйпа туртса илесшĕн. Вĕсемшĕн пулсан, никам та, нимĕн те мар...

**Семен.** Наккă! Манăн икĕ сурăха пырса ил!

**Иван.** Мĕн каласси пур вара...

**Чекалкин.** Пĕр-пĕринпе килĕшсе пурăнниничен ырри пулас çук. Паян хăвăрах куртăр акă, апатне те лайăхлатрĕç. Ĕç те параççĕ. Заводра ĕçлеме пахăлькке те кирлĕ мар. Тип çĕр... Татах шанмастăр-и-ха?

**Иван.** Шанатпăр, шанатпăр, Макар Иванăч... Микула сăмаххине ан итле. Вăл—çынни çĕтĕк чунлăскер.

**Микула.** Мĕн çĕтĕк чунлă? Чекалкин теменле аван çын пултăр та, вăтăр пус çинчен пĕр сăмах та каламарĕ.

**Семен.** Чăнах, Чекалкин тус, вăтăр пуса каялла илесчĕ. Питĕ мăшкăл вĕт.

**Сасăсем.**—Вăтăр пус çинчен каласчĕ!

— Вăтăр пуса каялла илесчĕ!

**Чекалкин.** Тăвансем... Пăхатăп, пăхатăп та эпĕ, сирĕн хушăра хăшпĕрисем ют çĕршыв çыннисем пек калаçаççĕ. Вĕсемшĕн пулсан эсир ĕççĕр юлни нимĕн те мар. Шухăшлăр-ха хăвăрах, калăпăр, ĕçукçине хуштарса пама пулĕ. Вара хуçасен тавар хакне ўстерме тивет. Тавар хакне ўстерсен—илекен пулмасть. Сутмасан ĕç пĕтсе ларать. Ĕççĕр

тăрса юлсан пит лайăх пулать-и вара? Хисеплĕ тăвансем... Эсир çеç мар, хальхи йывăр саманара Раççей чапа тухтăр тесе, пурте вăй çитнĕ таран парне кӳретпĕр... Тăшмана çĕнтерес тесен, тӳсес пулать...

**Иван** (*Мĕкĕте килнине курса*). Макар Иванăч, Макар Иванăч! Ерипен калаç, Мĕкĕте килет...

**Чекалкин**. Мĕкĕте? (*Хăрана пек пулса.*) Чимĕр-ха, тăвансем! Тепĕр чухне калаçăпăр. Манăн Никита Михайлăвич куç тĕлне пулас марччĕ. Ялан сирĕнпе явăçса çӳренине пĕлсен, куç ӳкесрен хăрушă. Эсир те шăп пулăр... (*Васкаса каять. Бурлаксем тирĕк илсе хуран умне пырса тăраççĕ. Васли пăтă тултара-тултара парать. Малта Иван*).

**Иван**. Чăнах та çуллă пăтă-çке паян?

**Семен**. Çуллă пăтă? А батюшки мой, мăнкун ăçта вăл!

(Пăтă антарса илсен, пĕр тирĕк кутне икшерĕн-виçшерĕн ларса çиеççĕ.)

**Семен**. Хуçа хуçах çав. Ятлать те, йăпатать те.

**Микула** (*Иванпа иккĕшĕ пĕр тирĕкрен çиеççĕ*). Çак выç кашкăра курсан, çăтас татăк та пыра урлă ларать.

**Иван**. Калаçса ларан кирлĕ мара.. Умра пек чух, хып та хып. Чекалкина тавту. Вăл тăрăшман пулсан, шăршлă пулăпах çырлахаттăмăрччĕ.

(Мĕкĕте кĕрет. Хул айне пĕчĕк пичке йăтнă.)

**Мĕкĕте** (*Ваçли патне пырса*). Çуне пăчах ятăн-и? (*Ваçли чĕнменнине кура, асилсе*). Пĕлетĕп, пĕлетĕп, хурланан эсĕ... Шел... Çамрăклах пысăк хуйхă куратăн... Мĕн тăвас тен, ачам, хам та пит хуйхăратăп та... (*Куççульне шăлнă пек тăвать.*) Чĕртмелле пулсан, ним шеллементтĕмччĕ. Анчах, ваттăн вилес йăли пур... Хушăн ан хуйхăр. Эсĕ правур ача, пултаракан ача. Кунтан таврăнсан, хам киле йышăнăп. Тутă та, питĕ те пулăн. Кӳр-ха, кружка тупса пар...

**Ваçли**. Халех, Мĕкĕте Михалчă. (*Васкаса кружка тупса парать.*)

**Мĕкĕте**. Аллă пус штраф тесе юри каларăм эпĕ паçăр. Пĕр пус та чакармастăп. (*Пичкерен эрех тултарса парать.*) Ме-ха, ĕçсе пар.

**Ваçли**. Аюк, Мĕкĕте Михалчă. Эпĕ нихăçан та эрех ĕçсе курман.

**Мĕкĕте**. Епле вара, ман сăмахран тухма пултаран эсĕ?

**Ваçли**. Ах тур, епле ĕçем-ши? (*Ирĕксĕр ĕçет.*)

**Мĕкĕте**. Вот молодца... А, çуне пĕтĕмпех яр ăна. Пĕрре пĕçермеллĕх çеç парса янă ку çăва.

**Иван**. Микула, куртăн-и? Мĕкĕте эрехпе килчĕ.

**Микула**. Паллă, расчут парас вырăнне эрехпе çырлахтарма килнĕ. Эпĕ, тем пулсан та, ĕçместĕп.

**Иван.** Ун енне кайсан, ĕçмесĕр те лайăх шутлать вăл...

(Мĕкĕте сулă çине кĕрсен халăха хисепленçи пулса, çĕлĕкне хывса пуç таять.)

**Мĕкĕте**. Апачĕ тутлă пултăр, тăвансем!

**Семен.** А батюшки мой, тутлă, Мĕкĕте Михалăч! Кун пекех çуллă çитерсен, суккăр тăвăн-и-ха эсĕ пире?

**Мĕкĕте.** Паянхи пек хастарлă ĕçлесен, çуллă пăтă çитерме те юрать. Эрех ĕçтерсен те çылăх пулмасть. (*Пичкерен эрех тултарса илсе.*) Кăмăл уçăлнă пек чух, ĕçер-ха... Тавсие, хурăнташсем! (*Ĕçсен каллех тултарать.*) Карпов хуçапа иксĕмĕр: пĕрре ĕçтерер-ха çавсене, терĕмĕр. (*Тултарнă эрехе Микула патне йăтса пырать.*) Тыт-ха, Микула. Эсĕ, ĕçре пуринчен хастар пулаканччĕ, хăнине те малтан пул. Сивве шăннисем çăва патне тухса кайччĕр.

**Микула**. Тавта пуç, Мĕкĕте Михайлăч. Ман расчутра пĕртик те пулин укçан илесчĕ-ха.

**Мĕкĕте**. Расчут?.. Мĕнле расчут? Кам каларĕ сире расчут тесе? Ыранах тепĕр ĕç паратпăр. Хамăр ял çыннисене ĕç памасан, кама парас?

**Микула.** Тепĕр ĕçе каяс пулсан та, задатка укçан илесчĕ-ха ман.

**Мĕкĕте.** Тăм пуç... Шутламалли эрех мар ку. Улталатăп пулсан, хĕвел пур акă... Таса вăрманта сăхсăхатăп, çакăнтах çĕр çăттăр! Ырă сунса, ял-йышпа пĕрле пурăнас тесе ĕçтеретĕп.

**Семен.** Микула, эсĕ мĕн унта çĕнĕ çын пек пăркаланса тăратăн. Параççĕ-тĕк—ил, çапаççĕ-тĕк—тар!

**Микула.** Мĕн тăван эсĕ манпала? Ĕçессӳ килет-тĕк, ху ĕç!

**Семен.** Эй, ха?.. Калаçса ларать, чăнах. Мĕкĕте Михайлăч! Мана пар-ха, хам ĕçсе кăтартам çавна!

**Мĕкĕте.** Вот ырă çын... Ман кăмăллă çын. Тилмĕрттерес-тăвас йăли те çук. (*Тултарнă эрехе Семене парать.*)

**Семен.** А батюшки мой, тутлă пулчĕ ку! Тепрер кружка пулмасть-ши? Хам пая, апат çиес умĕнех вырнаçтарса хывас.

**Мĕкĕте.** Парас, парас... Кунта-ха апат çисен ĕçмелĕх те пур... (*Татах тултарса парать*).

**Семен** (*эрехе ĕçсен*). А батюшки мой, аван вырнаçрĕ-ха ку...

**Мĕкĕте.** Вырнаçнă япала килĕшӳллĕ вăл.

**Семен** (*вăрттăнтарах*). Микула, чистă антра-кăшманах эсĕ!.. Ма ĕçместĕн-ха?

**Микула**. Ху кӳпсе тултарнă пулсан, çынна сĕнмесен те юрĕ.

**Мĕкĕте** (*эрехпе Микула умĕнчен иртсе кайса Иван патне пырать*). Микула ĕçмерĕ-ха хуть, юрать... Хамăра перекет. Кил-ха, эсĕ тыт.

**Иван**. Эпĕ те ĕçместĕп, Мĕкĕте Михалăч. Ман хамăн та укçан илсе курасчĕ.

**Мĕкĕте**. И-и... Эсир Микулапа тахçанах пĕр сăмах пĕçернĕ курăнать. Юрать, юрать.. Ĕçменни нимех те мар. Микулапа иксĕр эсир, ĕçе те каясшăн мар пулмалла. Çапла-и?.. (*Иван умĕнчен иртсе кайма тăрать.*)

**Иван** (*сасартăк*). Давай, пурпĕрех!

**Мĕкĕте**. Çук, пурпĕрех мар. Хăвăн ирĕк... (*Урăххисене ĕçтерет.*)

**Микула**. Çӳрме темерĕн... Çавна та тӳсеймерĕн-и?

**Иван**. Хуть ĕç, хуть ан ĕç, шучĕ пĕр пулать...

**Семен** (*хĕрсе кайнă*). Эй-ха? Каларăм, панă пек чух ĕç, тесе. Ĕçмесĕр кама хăратрăн ĕнтĕ?

**Иван**. Ĕçмен-тĕк, ĕçмен пултăр. Кирлех мар...

**Семен**. А батюшки мой, Иван та асланса кайнă. Манăн хам ĕмĕре ухмахпах ирттересчĕ-ха. Ĕçукçине хакла ӳкерсе пултăр. (*Хăй кружкине илсе Мĕкĕте патне пырать.*)

Мĕкĕте Михайлăч, тултар-ха тепрер кружка. Тур келашле виççĕ пултăр.

**Мĕкĕте.** Парас, парас... (*Тултарса парать. Эрех ĕçнĕ çынсем ыттисем те хĕрсе кая пуçланă, шавлама тапратаççĕ. Мĕкĕте эрех тултарса каллех Иван патне пырать.*) Татах ĕçместни?

**Семен.** Иван, ĕç! Гулям, едрит-кутрит!

**Мĕкĕте.** Çапла пулмасăр... Хамăр çын тесе куркине те туллирех тултартăм. Ĕç-ха!

**Иван.** Çаплах пулĕ те... (*Микула çине пăхса илет.*)

**Семен.** Эй-ха, Микула çине мĕн пăхмалли пур? Сарă хĕр-им вăл? Микула пуçĕнче çил вылянине кам пĕлмест!

**Сасăсем:**—Ĕçсе пар ĕнтĕ!

— Мĕн пăхса тăран?

— Пирĕнтен уйрăлас терĕн-и?

— Ĕç!

**Иван.** Тепĕр тесен?! (*Кружка ярса тытса сывламасăр ĕçсе ярать*).

**Семен.** Кун пек тесен—бурлак темелĕх те пур... Ме-ха, юратса ман пая ĕç-ха тата.

**Иван** (*тепĕр кружкине те ĕçсе ярать*). Уф... çăва тĕпнех...

**Мĕкĕте.** Молодца, молодца... Чăн та бурлак теме юрать. (*Микулана.*) Эсĕ халĕ те ĕçместĕн-и?

**Микула**. Çук, ĕçместĕп... Хуть те ĕçмесĕрех ĕçнĕ тесе çырса ларт.

**Мĕкĕте**. И-и, ара?.. Ĕçместĕн пулсан, хăвăн ирĕк. Сĕнни пултăр, ӳпкев хăвăнта. Хам мулпа питех ирĕксĕрлес мар-ха. Тăкăнса выртаканни нимĕн те çук ман. (*Пичкене çĕре лартса.*) Ну, тăвансем! Юлашки эрех пăчах сирĕн. Ĕçĕр, юрлăр, ташлăр та... Карпов хуçапа иксĕмĕре асăнăр. Çитмест пулсан, татах пырса илĕр. Ыран урăх ĕçе каятпăр. (*Каять.*)

**Семен**. Ур-р-а-а! Мĕкĕте Михалăч!

**Иван**. Халăх, пăхăр-ха! Микула пирĕнтен уйрăлса кайнă та, святой пекех пăхса ларать.

**Семен**. Чăнах, мĕнле япала вăл, юлташсенчен уйрăлас йăла? Бурлак-и эсĕ, е бурлак мар-и?

**Микула**. Бурлак, юлташсем! Емрипех бурлак эпĕ! Давай эрех! Анчах Мĕкĕте аллинчен мар, сирĕн алăртан ĕçетĕп. Мĕкĕте çĕлен вăл. Пĕр аллипе ĕçтерет те, тепринпе сăхать... (*Иван аллинчи эрехе илсе ĕçет.*)

**Иван**. Ну вот... Тахçанах çапла тумалла пулнă.

**Семен**. Атту, çĕнĕ çын пек ларать... Ухмах, паянхи пурнăç час-часах килмест вăл пирĕн. Пур чухне—ĕç, çук пулсан, шăлна çырт. (*Юрлама пуçлать. Ун хыçĕнчен ыттисем те юрлаççĕ.*)

Хура тур лаша шăнкăрмн
Сасси аякран илтĕнет.
Айта, ямшăк, хăвала!

Лаша та лайăх, ай, тесе,
Çынран иртсе каяс мар;
Ямшăк хуллен хăвала.

Лаша та начар, ай, тесе,
Çынран юлса пырас мар.
Айта ямшăк, хăвала!...

Матка та начар, ай, тесе,
Çын маткине хапсăнас мар.
Айта, ямшăк, хăвала!

Матка та лайăх, ай, тесе,
Çын маткине тиркес мар.
Айта, ямшăк, хăвала!

*(Чекалкин хўтлĕхрен тухса килет.)*

**Иван.** Ак, пирĕн Макар Иванăч персе çитрĕ!

**Семен.** Эй-ха? Гулям, едрит-кутрит!

**Чекалкин.** Ĕçĕр, ĕçĕр тăвансем! Сире савăнăç пултăр тесе тăрăшрăм.

**Микула.** Хуть те темле тăрăшнă пултăр та, вăтăр пус çинчен татса памарăр.

**Чекалкин.** Мĕнле татса паман? Чиперех ăнлантартăм-çке паçăр... Çĕнĕрен хушса çакна çеç калама пултаратăп: заводра ĕç хакĕ урăх пулать.

**Семен.** Ша, халăх! Ман пуçа пĕр ăслă шухăш килсе кĕчĕ. Ĕçе каятпăрах тесен, Чекалкин тус умĕнче договор тăвас. Унсăрăн, чăхăмăç лаша пек каялла вырттатпăр та, хăнт та сикместпĕр.

**Иван.** Тĕрĕс, Семен... Макар Иванăч, договор тума пулăшсам пире.

**Чекалкин.** Ма пулăшас мар? Пулăшатăп, пулăшатăп.

**Семен.** Во, едрит-кутрит!

**Иван.** Макар Иванча „урра" çĕклес!

**Семен.** Урра-а!..

(Халăх Чекалкина кўпеленсе тытса урра çĕклет.)

**Чекалкин** (*халăх урра çĕклеме чарăнсан, укçа кăларса парать*). Мейĕр! Мухмăра ман шутран чĕртетĕр!

**Иван** (*васкавлă эрех тултарса пырать*). Макар Иванăч!.. Çук, апла мар-ха... Макар!.. Çаплах каласа чĕнем-ха... Макар!.. Пире ырă сунатăн пулсан, ĕç-ха!

**Чекалкин.** Тăвансем! Халиччен эрех ĕçсе курман пулсан та, хура халăхшăн пулсан, отказ тума пултараймастăп.

**Семен.** Тĕрĕс, Чекалкин тус! Пачăшка та хура халăхшăн кĕл тăвать. Ĕç, едрит-кутрит!

**Чекалкин.** Тав сире! (*Ĕçсех яарть.*) Ĕнтĕ каям-ха... Договор çинчен калаçса пăхам. (*Каять.*)

**Семен** (*ташласа ярать*). Ёçĕ пулсан—ĕçлетпĕр! Ёçме пулсан—ĕçетпĕр! Вилĕм çитсен вилетпĕр! Хоть, хоть ходила, хуть те мана тем кала! Эпĕ сана Иван теп, эсĕ мана Семен тен! Ах, ну, махну! Не давай махху! Хоть, Хоть! Хоть! Хоть!

(Морев килет.)

**Васук**. Кĕркури пичче!..

**Морев**. Эсĕ те кунта-и? Мĕн ĕçре?

**Васли**. Кăшаварта...

**Морев**. Маттур... Апла пулсан, çĕр çинче тата тепĕр бурлак хутшăнчĕ... Анчах, мĕн пулнă сана?.. Ма макăратăн эсĕ?

**Васли**. Атте вилнĕ...

**Морев**. Хăçан?

**Васили**. Кĕçĕр... Шăнса вилнĕ... Чирлĕреxчĕ вăл.

**Морев**. Эх, самана...

**Семен** (*Морева курса ташлама чарăнать*). Эй-ха?.. Пăхăр-ха, пăхăр, халăх!

**Микула**. Морев! Кĕркури Петрович! *Чупса пырса ал тытать.*) Мĕнле майпа, ăçтан?..

**Морев** Заводран, Микула.

**Микула**. Мĕнле заводран? Чулхулана каятăп терĕн-çке?

**Морев**. Çук, заводра грузчик пулса ĕçлетĕп.

**Иван**. Ку çын мĕн леш тĕнчерен тупăнчĕ-и?

**Морев**. Лайăх пурăнатăр-и, юлташсем?

**Семен.** Кулям, едрит-кутрит!

**Морев.** Куратăп, хавассăн ирттеретĕр кунçĕре...

**Микула.** Ним хавасси те çук, Кĕркури. Чистах антрана тухса кайнă эпир... Тин çеç ĕçукçине вăтăр пус чакарчĕç. Тутлă та çитереççĕ... эрех те ĕçтереççĕ.

**Иван.** Эсĕ, Микула, ху антрана тухнине çын çине ан йăвантар. Пĕтĕмпех пирĕн Макар тивлечĕ ку. Макар тăрăшнипе ыран завода ĕçлеме каятпăр.

**Морев.** Мĕнле Макар вăл сирĕн?

**Микула.** Кунти прикащик, Чекалкин...

**Семен.** А батюшки мой, паттăрскер! Хуçасене бастовка тăватпăр тесе хăратнă вăл. Ентĕ, кулям... А, ыран—çĕнĕ ĕçе!..

**Морев.** Пит аван, пит аван... Ĕç кирлех пире... Анчах мĕн ĕç тума, кам вырăнне каясси çинчен шухăшланă-и эсир?

**Семен.** Мĕн тума шухăшламалла пирĕн ун çинчен? Ĕç пулсан, ĕçлетпĕр. Ĕçмелли пулсан, ĕçетпĕр.

**Иван.** Эсĕ, Морев, каллех хĕллехине тапратасшăн пуль-ха... Çитет... Ун чухне те сан пирки пĕтĕм яла ухтарса тухрĕç. Якур пиччене те эсех хĕенттертĕн...

**Микула.** Ухтарнă пулсан, мĕн вара?

**Иван.** Çук, çук... Ан та калаç... Ху çӳрекен çулпах уттар.

**Морев.** Ман çул—сирĕн çул, Иван... Анчах, сире суяççĕ...

**Семен.** Кам суять?

**Морев.** Пурте! Мĕкĕтерен пуçласа Чекалкинĕ мĕнĕпех...

**Иван.** Каларăм сана, Чекалкин çинчен ан тапрат тесе.

**Семен.** Э-й-я? Чекалкин пирĕн тус вăл!

**Морев.** Çук, Чекалкин сирĕн тус мар вăл, Семен! Чекалкин сирĕн курайман тăшман. Хуçисене çăласшăн, сирĕн умра хурăн пуçлă çĕлен пек йăпăлтатать. Мĕншĕн тесен, вĕсен шанăçĕ сирĕн çинче... Вĕсем сире, заводра хаваличчен ĕçленĕ рабочисем вырăнне ĕçе тăратасшăн...

**Семен.** А батюшки мой, Кĕркури! Ытла та тăрлавсăр этем мĕн эсир... Мĕн тума çын вырăнне ĕçлеме яччĕр вĕсем пире?

**Морев.** Юлташсем! Заводри рабочисем забастовка тапратса янă. Хуçасем, забастовка тăвакан рабочисене заводран кăларса ярса сире ĕçлеттересшĕн!

**Иван.** Кам хушнă вĕсене забастовка тума?

**Морев.** Пурнăç хушнă, Иван! Хĕн-хур саманине хирĕç пĕтĕм рабочи класс тапраннă.

**Иван.** Кирлĕ мар пире бастовка! Çапла вĕт, халăх? Ĕçлеме каятпăр вĕт?!

**Сасăсем:**—Кирлĕ мар бастовка!

—Ĕçлеме каятпăр!

**Морев.** Çук, каймастпăр, юлташсем! Бурлак нихçан та рабочисен тăшманĕ пулман. Пирĕн пурсăмăрăн та пĕр тăшман: мул хуçисемпе çĕр улпучĕсем! Большевиксен партийĕ сире те забастовкăна хутшăнма чĕнет. Эпир сакăр сехетлĕ ĕçкунĕшĕн кĕрешетпĕр. Улпутсенчен çĕре туртса илсе чухăн хресченсене валеçсе парассишĕн тăратпăр! Коронă тăхăннă çĕлен пуçне çапса салатса, халăх влаçĕ, революцилĕ власть тăвассишĕн кĕрешетпĕр!

**Иван.** Акă мĕн, Кĕркури... Питĕ лайăх итлерĕмĕр сана, ĕнтĕ эпир каланине итле... Ешĕлĕ ку таранччен юман туратĕнчен çакса яман пулсан сана, турра тав ту... Кĕтсе иленех... А пире муталаса ан çӳре... Кай тенĕ-тĕк сана, кай ху çулупа...

**Семен.** Эй-ха?.. Апла мар, Иван... Тем пулсан та, хамăр ялсем... Çул курки парсах ярăр...

(Эрех тултарса пырать.)

**Микула.** Халăх! Эпир паян Мĕкĕтен эрех пички ăшне путнă та, хамăр умри пурнăçа та курми пулнă. Морев тĕрĕсех калать, ниçта та каймастпăр! Эпир те рабочисемпе пĕрле пулатпăр!

**Сасăсем:**—Каймастпăр!

—Каймастпар!

**Иван.** Эсир ан кайăр, эпир каятпăр!

**Сасăсем:**—Каятпăр! Каятпăр!

—Кирлĕ мар пире бастовка!

(Çав вăхăтра Укахье килсе тухать.)

**Семен.** Эй-ха, Иван! Кам килет унта?

**Иван.** Мĕн шыраса килет вăл?

**Семен.** Мĕн тума? А батюшки мой, санпала Иван, çавна та тавçăрса илейместĕн-и? Пĕччен пурăнас килмен унăн...

(Укахье халăх ушкăнĕ патне çитеймесĕр тунката çине ларать.)

**Иван** (*Укахье патне хăвăрт пырса*). Укахье, мĕн шыраса килтĕн çакăнта çитиччен? Килте тем пулмарĕ пуль вĕт?

**Укахье.** Якур пиччене калама килтĕм...

**Микула.** Мĕн пулнă?

**Укахье.** Анук çакăнса вилнĕ...

**Васли.** Инке те-и?..

**Морев.** Лăплан-ха, шăллăм...

**Укахье.** Мĕкĕте... пусмăрланă ăна...

**Микула.** Ирсĕр чун! Пур çĕрте те Мĕкĕте.

**Семен.** А батюшки мой!.. Якурĕ—кунта, Анукĕ—унта...

**Укахье.** Тата, эсир ĕçе тухса кайсанах, яла кантур тавраш сем пычĕç те... Мĕкĕтене памалли парăмшăн тустарма пуçларĕç...

**Сасăсем:**—Манне те илсе карĕç-и?

—Пирĕнне тивмерĕç-и?

**Укахье.** Пурне те астăваймастăп. Семен арăмĕ терĕç-и, урамра йăваланса макăратчĕ... Юлашки икĕ сурăхне илсе карĕç тет...

**Семен.** Манне-и?.. А батюшки мой, камăнне пуласси пур, манне ара? Ман икĕ сурăхчĕ... Мĕнле япала ку, едрит-кутрит! Ăçта ан пыр, унта Мĕкĕте!

**Морев.** Çук, халăх, ĕç Мĕкĕте çинче çеç мар...

**Сасăсем** (*Морев сăмаххине пӳлсе*):—Ан калаç! Мĕн тусан та, Мĕкĕте тăвать!..

— Мĕкĕте тăвать!..
— Долой Мĕкĕтене!
—Долой!

(Васкаса пакурĕсене иле-иле чупаççĕ.)

**Морев.** Затор тапранса карĕ... Анчах кукăра перĕнсе, чарăнасран хăрушă... Васкас пулать, Микула...

**Ваçли.** Эсĕ те карăн-и, Кĕркури пичче?

**Морев.** Эпĕ халех... Таврăнатăп, шăллăм...

(Ваçлине савса хăварать, Микулапа иккĕш те каяççĕ.)

**Ваçли.** Мĕн курас-ши ĕнтĕ ман? Ăçта кĕрсе каяс-ши? Манран тăлăх-турат никам та çук-çке...

Укахье Ваçли пуçне хăй кăкри çумне тытса хăй те макăрать.

ЧАРШАВ.

## Пĕрремĕш картина

Карпов хуçа кантурĕнче. Кабинет. Хаклă йышши сĕтел тăрать. Çемçе пукансем. Сĕтел çинче телефон аппарачĕ. Стена çумĕнче иккĕмĕш Микула патша портречĕ çакăнса тăрать. Карпов пĕчченех. Урамра салтаксем юрласа килнĕ сасă илтĕнет.

Солдатушки, бравые ребята,
Где же ваши жены?
Наши жены—ружья заряжёны,—
Вот где наши жены.

(Карпов чӳрече умне пырса урамалла пăхса тăрать.)

**Офицер сасси.** Отряд, стой!.. На лево!.. Равняйся! Смирно! Стоять вольно!..

**Карпов.** Мухтав турра... Юлашкинчен те пулин кĕтсе илтĕм...

(Офицер кĕрет).

**Офицер** (*рапорт парса*). Господин Карпов! Его сиятельство господин губернатор хушнипе отряд çитрĕ...

**Карпов.** Тавтапуç, тавтапуç ваше благородие... Чимĕр-ха, чимĕр... Эсир?..

**Офицер.** Астăватăр пулсан, эпĕ—дворянин Курбатов ывăлĕ.

**Карпов.** Тимофей Васильевич... Тимоша!

**Офицер.** Шăп çавă, Моисей Антонович!

**Карпов.** Мĕнле астумастăп пулĕ... Миçе хут пынă эпĕ сирĕн патра? Анчах, ун чухне эсир çап-çамрăк ачаччĕ. Халь—вырăс офицерĕ! Маттур, маттур... Чунтан хавас, килнĕшĕн. А мĕншĕн иккенне...

**Офицер.** Ăнланатăп, господин Карпов! Патруна хĕрхенмĕпĕр, кирлĕ пулсан...

**Карпов.** Пит аван, пит аван... Халь отряда канма илсе кайăр-ха. Хурăнвар ялĕнче мĕн кирлине пĕтĕмпех хатĕрлесе хунă унта. Эреххине ан шеллĕр. Тен кĕçĕр çĕрле операци тума лекĕ. Ăнăçлă иртсен, хулари çуртра бал тăватăп. Пымасăр ан юлăр вара...

**Офицер.** Хавасланса пыратăп, Моисей Антонович... (*Тухса каять.*)

**Карпов.** (*телефона шăнкăртаттарать*). Станция! Хусана парăр-ха... Хусан! Губернатор кабинетне парăр-ха! Алло! Ваше сиятельство, отряд янăшăн чунтан тав тăватăп... Çитрĕç, çитрĕç... Конешно ваше сиятельство... Либералла вылямалли иртсе кайнă. Революци хумĕ пирĕн калăпран тухса, хамăр пуçа силлеме тытăнчĕ... Итлĕр-ха, Ваше сиятельство, манăн тата пĕр ыйту пур... Заводран илсе кайнă большевиксене часрах... А-а, пит аван, пит аван. Ырă хыпаршăн чунтан тав тăватăп, Ваше сиятельство. Эсир малалла та влаçа çирĕп тытасса шанса тăратăп. Ваше сиятельство, çак самантрах ман пата тинĕс урлă хăна килмелле. (*Урам-*

*ра лав çывхарнă шава илтсе.*) Акă, çитрĕç те пулас... Ыран, завод ĕçлеме тытăннă май, хулари çуртра бал тăватăп. Таврари миллионерсем пуçтарăнаççĕ. Мана хисеплетĕр пулсан, бала пыма манас марччĕ... Сирĕн хисеплĕ арăмна... Мăкăнь чечекĕ пек илемлĕ хĕрĕре салам... Сывă пулăр, Ваше сиятельство...

(Макдональд кĕрет.)

**Карпов.** Господин Макдональд!

**Макдональд.** О, мистер Карпов!

**Карпов.** Миçе çул, миçе хĕл ĕнтĕ эпир пĕр-пĕрне курманни?

**Макдональд.** О, да, мистер Карпов... Йăнăшмастăп пулсан, юлашки, хут Лондонра курнăçнăччĕ пулас?

**Карпов.** Тĕрĕс, господин Макдональд!.. Ларăр-ха, ларăр, тархасшăн. Çул çинче силленсе хăшкăлтăр пуль.

**Макдональд.** О, да, мистер Карпов! Раççей çулĕпе çӳреме чăн та тимĕр шăмă-шаклă пулас пулать.

**Карпов.** Çулйĕрсем тесен, мухтанмаллах мар, господин Макдональд... Анчах ун çинчен киле кайсан, акă, сĕтел хушшинче калаçса кулăпăр. Халь, эсир мĕнле хыпар илсе килнине пĕлесчĕ ман.

**Макдональд.** Телеграмма илтĕр-и?

**Карпов.** Илтĕмĕр.

**Макдональд.** Мĕнле?

**Карпов.** Пурĕ çирĕм процент чакартă-мăр та...

**Макдональд.** О, ман фирмă, эсир тавар хакне чакарма май тупасса шансах тăнă.

**Карпов.** Эсир мĕн, çавна калама çеç килнĕ-и вара?

**Макдональд.** Çук, мистер Карпов! Пирĕн клиентсем тавар кĕтеççĕ. Порта миçе кунтанпа тавар пымасть. Çитменнине Швеци хуçисем хăйсен йывăçне тата вунă процент чакарса сутма шут тунă. Мĕнпур тавара халех ăсатмасан, тата йывăç хакне халех тепĕр вунă процент чакарни çинчен Лондона пĕлтермесен, пирĕн акцисем пуç хĕрлĕ ярăнма пуçлаççĕ.

**Карпов.** Чорт возьми! Сире тинĕс урлă хушса ларма нимĕн те мар. Кунта... революци! Большевиксем вăй илме пуçларĕç. Çĕрĕшнĕ монархи Японие хирĕç çапăçма та пултараймасть.

**Макдональд.** Но, мистер Карпов, сирĕн монарх темĕнле начар пултăр та, вăрçă тапратнăранпа миçе миллион тупăш куртăр?

**Карпов.** Мĕнех вăл миллион? Ăçта Манчжури? Корея ăçта? Халăх пăлханать. Вăрçасшăн мар...

**Макдональд.** О, да, мистер Карпов... Вăл енчен илсен, сирĕн халăх чăн та невежа. Лайăх ĕçлекен заводсене чара-чара лартаççĕ. Ăçта сирĕн мухтанă жандармери? Поли-

ци? Е, хăвăрăн вăй çитмест пулсан, пирĕн аслă Великобритани пулăшу пама пултараймасть-и мĕн?

**Карпов.** Конешно, конешно, господин Макдональд. Анчах эпир уссăрах пăлханатпăр. Отряд та çитрĕ. Кĕçĕр заводри мĕн пур шанчăксăр çынсене тасатса, вĕсем вырăнне бурлаксене тăрататпăр...

(Мĕкĕте кĕрет. Анчах палламан çын пуррине курса ним чĕнеймесĕр пăхса тăрать.)

**Карпов.** Никита Михайлович, эсир мĕн? Иртĕр кунталла... Паллашăр! *(Макдональд çине кăтартса.)* Англирен килнĕ хăна, пирĕн таварсене илекен фирмăн представителĕ, господин Макдональд. Ку, ман компаньон, господин Байталов!

**Макдональд.** Питĕ хавас паллашма...

**Карпов.** Ну, Никита Михайлович, ĕç-пуçсем мĕнле?

**Мĕкĕте.** Çу пекех пыраççĕ-ха, Моисей Антонович. Лешсем татти-сыпписĕр юрра яраççĕ. Ĕç паратăп терĕм те, тем пекех савăнчĕç, ĕçукçине чакарни çинчен те манса кайрĕç.

**Карпов.** Пит аван, пит аван...

**Макдональд.** Тавтапуç сире, мистер...

**Карпов.** Байталов...

**Макдональд.** О, да, мистер Байталов, тавтапуç сире! Ку хыпарпа пĕтĕм кăмăла уçса ятăр эсир.

**Мĕкĕте.** Мĕн тăвас тен, тăрăшас пулатьçке...

(Чекалкин васкаса кĕрет).

**Чекалкин.** Господа... *Пӳлĕннипе урăх сăмах чĕнеймесĕр пукан çине ӳкнĕ пек ларать*)

**Пурте харăс.** Мĕн пулчĕ?

**Чекалкин.** Господа!.. (*Каллех нимĕн те калаймасть.*)

**Карпов.** Господин Чекалкин, мĕн пулнă? Ĕçе кайма отказ турĕç-и?

**Мĕкĕте.** Ĕçне каятпăр терĕç те-ха вĕсем... Эпĕ халь çеç килтĕм унтан...

**Макдональд.** Нимĕн те ăнланмастăп!

**Чекалкин** (*сывлăшне çавăрса ярсан*). Господа! Тав тăвăр аслă патшана, хура халăха хут вĕрентменшĕн.

**Карпов.** Господин Чекалкин! Калаçăр тархасшăн йĕркеллĕ, мĕн пулнă?

**Чекалкин** (*кĕсъинчен хут татăкĕ кăларса парать*). Акă, вулăр! Мĕнне хăвăрах пĕлĕр!

**Карпов** (*хăй ăшĕнче вулать*). Фу ты!..

**Чекалкин.** Кĕçĕр çĕрле, бурлаксем пурăнакан кăшшавуй патне большевиксем прокламаци пырса пăрахнă. Бурлаксене те забастовкăна хутшăнма чĕнеççĕ.

**Макдональд.** Большевиксен прокламацийĕ?

**Мĕкĕте.** Ара, ним сас-хура та çукчĕ-çке!

**Карпов.** Чорт возьми! Е, вуланă пулсан?

**Чекалкин.** Вĕсем пĕри те хут вулама пĕлмеççĕ.

**Карпов.** Мухтав турра, вуламан пулсан...

**Макдональд.** О, да, мистер Карпов...

**Карпов.** Куртăр-и ĕнтĕ... Халăх невежа пулни кирлĕ те пулчĕ.

**Макдональд.** О, да, мистер Карпов...

**Карпов.** Анчах кăмăлĕсем мĕнле вĕсен?

**Чекалкин.** Тĕрлĕ, господин Карпов... Тĕппипех шанма хĕн. Пуринчен ытла, Никита Михайловича курайманнисем нумай.

**Мĕкĕте.** Мана кураймаççĕ пулмасăр, мĕнпур ĕçне хам тăватăп та... Анчах, эпĕ хăрамастăп. Пурпĕрех ман сăмахран тухмаççĕ вĕсем.

**Чекалкин.** Ĕçе те пĕр условипе çеç кайма килĕшеççĕ.

**Карпов.** Мĕнле услови?

**Чекалкин.** Договор тума мана шантарас, теççĕ.

**Карпов.** Пит аван...

**Макдональд.** О, да, мистер Карпов...

**Мĕкĕте.** Ку условипе килĕшме пулать.

**Карпов.** Анчах договорне тăваччен шанчăксăр элементсене тасатасчĕ кунтан, отряд пур халь...

**Мĕкĕте.** Отряд çитнĕ-и?

**Карпов.** Çитнĕ.

**Чекалкин.** Вот, чăн та савăнăç... Чи мал-

тан стачкомрисене ҫаклатасчĕ.

**Мĕкĕте.** Микулана хăварас марччĕ. Ҫав ытла та хăюллăн калаҫать.

**Чекалкин.** Микула вăл Моревпа ҫыхланнă.

**Мĕкĕте.** Шуйттан пуҫĕ! Хăех яла пырса кĕнĕччĕ, тытаймарăмăр.

**Карпов.** Тытайманни вăл—ун майлă этемсем ăна пытарса усранине пĕлтерет.

**Мĕкĕте.** Семенпа Ивана та шанмастăп эпĕ.

**Чекалкин.** Семена ман шутпа та хăварма юрамасть. Анчах Ивана тивес мар. Вăл мана ĕненет. Тепĕр чухне хамăрах кирлĕ пулĕ...

**Карпов.** Шанатăп, урăх кирлех пулмасть вăл. Эсир суйни тăрă шыв ҫине тухсан, унтан хăрушă тăшман та пулас ҫук. (*Хут татăкĕ ҫине ҫырать.*)

**Макдональд.** О, да! Мистер Карпов!

(Халăх шавласа килнĕ сасă илтĕне пуҫлать.)

**Карпов.** Господа! Мĕн шавĕ унта?

**Чекалкин.** Халех пĕлетĕп, господин Карпов! Договор ҫинчен калаҫса татăлма килеҫҫĕ пулмалла.

(Васкаса тухса каять.)

**Чекалкин сасси.** Тăвансем!..

**Семен сасси.** Долой Мĕкĕтене, едриткутрит!

**Сасăсем:**—Долой!

—Долой!

—Давай Мĕкĕтене!

**Чекалкин сасси.** Тăвансем, чарăнăр-ха! Хуçасем договор тума килĕшеççĕ. Хам вуласа паратăп.

**Сасăсем:**—Вăтăр пус çинчен калаç эсĕ!

—Вăтăр пуса каялла парăр!

— Долой, Чекалку-пуçу!

(Шавласа каяççĕ.)

**Чекалкин сасси.** Тăвансем, чимĕр-ха! Эпĕ, халех!.. (*Васкаса кантура кĕрет.*)

**Карпов.** Мĕн шавлаççĕ вĕсем?.. Мĕн кирлĕ вĕсене?!

**Чекалкин.** Никита Михайловича юнаççĕ... Вăтăр пуса каялла ыйтаççĕ.

**Карпов.** Çÿрме! Хăвăн сăмсу айĕнче большевиксем ĕçленине туймăн.

**Чекалкин.** Бурлаксем ман сăмахран тухакан марччĕ, халĕ эрех ĕçсе урнă вĕсем.

**Тулти сасăсем:**

— Халăх! Алăка питĕрнĕ!

— Улталарĕç!

— Тап алăка!

— Çĕмĕр!..

— Салат!..

(Алăка темпе пенĕ сасă илтĕнсе каять.)

**Макдональд.** Мистер Карпов! Мирлĕ шухăшпа килнĕ халăх мар ку. Атăл пăлхавçисене тĕл пулас марччĕ ман.

**Мӗкӗте.** Ытла пит хӑратӑр пулсан, чӳречерен сикӗр!

**Макдональд.** Прощайте!

(Макдональд васкаса чӳрече патне пырса чӳречене уҫать. Чӳрече тул енче Микула пакурпа тӑрать.)

**Микула.** Салам, чаплӑ хуҫа...

**Карпов.** (*Макдональд хӑраса каялла кайнине курса*). Мӗн пулнӑ?

**Макдональд.** Унта, застава... Ӑҫта сирӗн отряд, мистер Карпов? Ӑҫта полици?

**Карпов.** Питех ан хумханӑр-ха, господин Макдональд... Халех пулать... (*Телефонпа шӑнкӑртаттарма хӑтланать, телефонӗ ӗҫлемест.*) Мӗнле япала ку? (*Татах шӑнкӑртаттарма хӑтланать. Трубкӑна тытса кӑшкӑрать*). Ало! Станция! Ало!.. Чорт возьми!

(Алӑка ҫӗмӗрни, халӑх шавӗ татах вӑйланать.)

**Чекалкин.** Господа! Пӗр ҫӑлӑнӑҫ ҫеҫ пирӗн!

**Карпов.** Мӗнле майпа?

**Чекалкин.** Вӑхӑтлӑха та пулин, паян ӗҫ укҫине чакармалла тунине пӑрахӑҫ тӑвар.

**Карпов.** Тата мӗн?

**Чекалкин.** Вара эпӗ халех тухса калатӑп та, йӑпанса каялла кайӗҫ. Ахалин, ӳсӗр халӑх тем тума та пултарать.

**Карпов.** Юрӗ, тухса кала, пӑрахӑҫ тӑватпӑр, анчах сан шут ҫинчен.

**Чекалкин**. Господин Карпов! Ма ман шут ҫинчен? Ман шут мĕнех вара вăл?

**Карпов**. Апла пулсан, чакармалли йĕрки те ҫук.

(Халăх алăка тапса йăвэнтарса кантура кĕрсе тулать. Малта Семенпа Иван. Хыҫаларах курăнмалла мар, Морев.)

**Чекалкин**. Мĕн турăр, е?

**Мĕкĕте**. Мĕнле хăйрăр эсир?

**Семен** (*Мĕкĕтене*). Ҫăварна ан кар-ха эсĕ...

**Иван**. Санпа калаҫма килмен эпир, Карпов хуҫа патне килнĕ.

**Чекалкин**. Мана та шанми пултăр-и?

**Иван**. Сана шанмасăр мар, Макар Иванович...

**Семен**. Шанмасăр, мĕн тăвас тен вара? Хăратас тетĕн-и?

**Иван**. Карпов хуҫа! Эпир сан патна Мĕкĕте Михалăч ҫинчен евитлеме килтĕмĕр. Вăл пире улталаса пурăнать.

**Карпов**. Кам калать сире, Никита Михайлович улталать тесе? Халех тасалăр, ман кил-ҫуртран. Алăка ҫĕмĕрсе кĕрекен разбойниксемпе суд умĕнче ҫеҫ калаҫатăп эпĕ!

**Чекалкин**. Тухăр, тухăр... Эсир капла айкашса хуҫана намăса кĕртетĕр. Кунга тинĕс урлă килнĕ ҫын та пур. (*Иванпа Семене ҫавăтса кăларса яма тăрать.*) Айтăр, айтăр тулалла... Унта калаҫса татăлатпăр.

**Иван.** Чим-ха эсĕ, Макар Иванович... Каятпăр та...

**Семен.** Ан тыт тенĕ-тĕк, ан тыт, Чекалкупуçу!..

**Мĕкĕте.** Ман çинчен евитлеме килтĕр эппин? Ĕçтернĕ-çитернĕ сире... Вăй хушнă пек чух, хуçасем çине тапăнас терĕр-и? Марш, кунтан! Ну?!

**Морев** (*мала тухса*). Юлташсем! Куртăр-и ĕнтĕ? Мĕкĕти, Карповĕ, акă тата сирĕн хисеплĕ Чекалкинĕ пурте пĕр калăп вĕсем... Кусем сахал тесен, пирĕн ĕнсене хыракан, тинĕс урлă вĕçсе килнĕ çăхан та пур кунта.

**Мĕкĕте.** Морев!

**Чекалкин.** Морев!

**Макдональд.** Большевик?

**Морев.** Çапла, большевик!

**Карпов** (*Револьвер туртса кăларса халăх çине тĕллет*). Халех тухса кайăр! Перетĕп!

**Морев.** Кама перес, Карпов хуçа? Тăвăл тапратса янă затора кун пек теттепе чарса лартаймăн. Вес, аллу та чĕтресе тăрать сан... Луччĕ, кӳр-ха хама... Манăн аллăсем ĕçпе хытнă, чĕтресе тăрас çук... (*Карпов аллинчи револьвера туртса илет.*)

ЧАРШАВ.

## Пĕрремĕш картина

Сцена иккĕмĕш актриех. Тĕттĕм каç. Вучахра çунакан вут çути çеç тĕксĕмĕн çутатать. Бурлаксем кăшшавуйра çывăраççĕ. Мĕкĕтене, Карпова, Чекалкина тата Макдональда пĕрерĕн-пĕрерĕн йывăç çумне çыхса тăратнă. Пурте шăнса кайнă вĕсем, чĕтреççĕ. Семен хĕрĕнкĕрех, револьвера кантрапа çыхса мăйран çакса янă, вучах кутĕнче юрласа ларать. Унпа юнашарах эрех пички пур.

**Семен** (*юрлать*).

Хĕрхӳ, хĕрхӳ хĕр парать,
Ула курак туй тăвать,
Хурчки туя каясшăн,
Ай мăнтарăн пăрчканĕ
Туй маткинчен тăрса юлчĕ.

(*Пичкерен эрех тултарса ĕçет.*) Тавсие, ĕçкĕ çыннисем!..

**Мĕкĕте.** Семен Сидорович! Шăнса вилетĕп. Пĕр кружка та пулин эрех парсамччĕ. Ĕмĕрне те манмăттăм...

**Семен.** А батюшки мой, чăнах Семен Сидорович-и вара эпĕ?

**Карпов.** Мана та тултарса пар. Чĕрене сивĕ тивме пуçларĕ... Ĕмĕр хам патăмра усрăттăм...

**Макдональд.** О, да, мистер Карпов!

**Семен.** А батюшки мой, эсир те манмастӑр-и? Ха-ха-ха!!! Манмастӑр пулсан, эпӗ сире юмах каласа парӑп... Юмах юман тӑрринче, хам эп пичке умӗнче. Ӗлӗк-авал пӗр чухӑнӑн ула кӗсре пулнӑ тет, кӗсри пӗтӗ пулнӑ тет. Ҫӗр типсе ҫитсессӗн, чухӑн, ула кӗсрене ҫавӑтать те суха тума каять. Сухаларӗ, сухаларӗ те, кӑнтӑрла ҫитсен, шывпа ҫӑкӑр ҫырткаласа канма выртрӗ. Нумай выртни, сахал-и... Ыйӑхран вӑранса сиксе тӑчӗ чухӑн... А батюшки мой! Ула кӗсринчен инҫе те мар, тиха кипки вырта парать, а, тихи ҫук. „Аҫта кӗрсе кайнӑ ку ман тиха?" тет чухӑн... Хуйха карӗ ӗнтӗ... Ула кӗсрине ҫавӑтрӗ те килелле уттарать. Ялта, ял ҫӗмӗрлет, ухмах. А батюшки мой! „Пуян Миҫҫан айри хӑмланӑ", теҫҫӗ. Чухӑн ӑна илтсенех тавҫӑрса илчӗ... Хӑпӑл-хапӑл халӑх пуҫтарттарать те калать: „Халӑх, тет, паян ман ула кӗсре хӑмланӑ, ӑна Миҫҫа вӑрласа кайнӑ", тет. Ҫук, тем пек тарӑхса каласан та, ӗнентереймерӗ чухӑн. „Пуянӑн айри те хӑмлама пултарать", терӗҫ пухура... Нумай иртет-и вӑхӑт, сахал-и — хай чухӑн пуйса каять. . Пӗрре халӑх пуҫтарӑннӑ та, ҫак пуйса кайнӑ йӗкӗт калать: „А батюшки мой, халӑх, тет, кӗҫӗр, манӑн суха тимрине кушаккайӑксем хышласа янӑ", тет. Пухури этемсем, ӗнсисене кӑтӑр-кӑтӑр хыҫкаларӗҫ те: „кушак-ка-

йăк тени питĕ тискер усал кайăк, хышлама та пултарать", терĕç... Ăнлантăр-и, е ăнланмарăр-и ку юмах мĕне пĕлтернине? Ăнланмарăр пулсан, хам ăнлантарса паратăп, эпĕ ăна тĕлĕкре курса пĕлнĕ. Кайнă пек эпир пурсăмăр та охота... А батюшки мой, хăвалатпăр кайăка. Кайăкĕ вăрмана, эпир ун хыçĕнчен... Кайăкĕ çырмана — эпир ун хыçĕнчен... А батюшки мой, чикеленсе анатпăр анаталла.. Çырма тĕпĕнче икĕ катка ларнă мĕн. Пĕри тирĕс шывĕпе, тепри пылпа. Эпĕ тирĕс шывĕ çине шапăлт кĕрсе ÿкрĕм, эсир пыл катки ăшне. Тухрăмăр та, мĕн тăвас тен, тасатмалла... Эсир ман çинчи тирĕсе çулласа тасатрăр, а эпĕ сирĕн çинчи пыла... Çавăнтанпа пылран риснĕ эпĕ.

**Мĕкĕте.** Семен Сидорович! Хуть те тем кала та, анчах шăнтса ан вĕлер. Тархасшăн, эрех ĕçтер-ха...

**Семен.** А батюшки мой, этем мар эсĕ, Мĕкĕте Михалчă... Хамăр пĕрле охота çÿретпĕр те, шăнтса вĕлеретĕп пулĕ вара? Паратăп, хаваспах паратăп... Тата тем курса ларăн, хуçасене шăнтса вĕлернĕ тесе, усал чап сарăласран хăрушă... (*Эрех тултарса ĕçтерет.*) Тĕппипех ĕç-ха... Хăна пул... Нумай çын пуçне çирĕн... Тем чул хĕрарăм пурăнăçне пĕтертĕн... Анчах нихăçан та халăхпа авлантарнине курман эсĕ... Паян — туй тăватпăр. Моревпа Микула пăшал илсе килч-

чĕр-ха... Отряда кайса ухтарсан... Ĕç! (*Татах тултарать.*) Тепрер кружка ĕç-ха... Сурăха илсе кайнăшăн пултăр...

**Мĕкĕте.** Хĕвел пур, каялла тавăрса паратăп...

**Семен** (*Мĕкĕте сăмахне каласа пĕтерме памасть, çăварне кружкăпа хупласа эрех ĕçтерет*). Айта, ĕç, едрит-кутрит! Кашкăр хăй çăварĕнчен сурăха парас пулсан, хĕвел те тепĕр енчен тухĕччĕ.

**Мĕкĕте** (*ĕçсе ярсан*). Ĕнтĕ çитрĕ. Ăшăнсах карăм. Питĕ пысăк спасибо сана, Семен Сидорович.

**Карпов.** Мана та тултарса пар-ха часрах!

**Семен**. А батюшки мой, санпала Карпов хуçа! Чистах ухмах çын пек калаçатăн эсĕ. Чыс курки тени черет урлă тивнине ăçта курнă эсĕ? Вăхăт çитсен,васкамасăрах тивĕ-ха... (*Эрех тултарса Мĕкĕтене парать.*) Тепĕр курка ĕç-ха, Мĕкĕте Михалчă.

**Мĕкĕте.** Спасибо, Семен Сидорович... Урăх пĕр тумлам та вырнаçас çук...

**Семен.** Эй-ха? Ма çав териех суйма вĕреннĕ эс, Мĕкĕте Михалчă? Сан шампа хырăмна тумлам эрех мар, Элнет тĕпĕнчи мĕнпур шуйттан та вырнаçать-ха.

**Мĕкĕте.** Семен...

**Семен** (*Мĕкĕтене малалла калаçма памасть, тӳрех, ĕçтерет.*) Тăраниччен кӳп... (*Каллех тултарать.*)

**Мěкěте.** Семен Сидорович! Тархасшăн!..

**Семен.** Эпě хěрěх çул ытла Семен Сидорович. Эсě халь çеç пěлтěн-и ăна? (*Эрех ěçтерме тăрать.*)

**Мěкěте** (*пăркаланса*). Ěçместěп... Тархасшăн, каялла тухать...

**Семен.** Суян... Сан хырăмунтан шуйттан та çăлăнса тухаймě... (*Револьвера кăтартса.*) Ăçта-ха, ěçместěн пулсан, çамкасем пит тěрекли вара сан?

**Мěкěте.** Ěçетěп, ěçетěп... (*Ирěксěр ěçсе ярать.*)

**Семен.** Ну, вот... Эрех ěçтермесěр шăнтрěç тесе ан ўпкеле... (*Мěкěте патěнчен юрла-юрла каять.*)

Хěрхў, хěрхў хěр парать,
Ула курак туй тăвать,
Хурчăки туя каясшăн,
Ай мăнтарăн пăрчканě
Туй маткинчен тăрса юлчě.

(*Макдональд тěлне çитсессěн юрлама чарăнать.*) Тавсие! Миç, миç... те приçччě, астăваймарăм-ха, едрит-кутрит... Ну, хăямата хăяккăн! Ячěпе тавсие тăвайманшăн ан çилен. Тěттěм çын, мěн тăвас... Анчах, сирěн Англи текеннинче лайăх эрех çук пуль-ха? Хамăрăн хăватлă, ароматлă эрехе ěçтерсе савăнтарам... (*Эрех тултарса ěçтерет.*)

Эпир ҫăвартанах ĕҫтерме те йĕрĕнместпĕр. Ĕмрипе хуҫасем валли ĕҫлеме вĕреннĕ.

**Макдональд** (*эрехе сыпса пăхсан сурса кăларать*). Тьфу, паккăҫ! Эрех-и ку! Шампански пар мана.

**Семен.** Ашăтмански тесе ан кутăнлан ĕнтĕ. Сивĕ эрех ĕҫме уҫă... Хамран пример илсе калатăп.

**Карпов.** Урăх йышши эрех ҫинчен калать вăл.

**Семен.** Эй-ха! Ан ӳпкелĕр, миҫ, миҫ, присс... Пирĕн кунган хăватлă, ароматлă эрех ҫук. Эсир тугине сисеймерĕр пулмалла-ха... Теп-рер курка йăвантарăр-ха... (*Эрех тултарать*).

**Макдональд.** Ĕҫместĕп, ĕҫместĕп! Мистер Карпов, мана темле паккăҫ ĕҫтереҫҫĕ.

**Семен.** А батюшки мой, аран асилтĕм... Мистер пештĕр, ĕҫ-ха, киле таврăнсан, чăвашсем хăна тума пĕлмеҫҫĕ тесе, суя чап ан сар. (*Эрехе Макдональд ҫăварĕ патне илсе пырать.*)

**Макдональд.** Ĕҫместĕп! Кра-ул-ул!..

**Семен.** Чăнах, ĕҫместĕн-и? (*револьверне кăтартса Макдональда шăплантарать.*) Ҫапла пулмасăр, ара? Аякри хăнан сĕнтерес йăли пур ĕнтĕ...

**Макдональд.** О, да!.. (*Ĕҫсе ярать.*)

**Семен** (*татах тултарса сĕнет*). Ку, чыс курки пултăр...

**Макдональд.** Мистер Çимен... Мĕн ĕçни çитнĕ. Тархасшăн урăх ан ĕçтер... Кирлĕ пулсан, ман çумра ылттăн часи пур, ылттăн çĕрĕ... Пĕтĕмпех ил, анчах тархасшăн урăх ан ĕçтер...

**Семен.** Эх, мистер пештĕр темерĕн... Ĕçтерни те сая карĕ. Кама курнă эсĕ мана? Мĕн тăвас ман сан ылттăнупа. Эпĕ хам ылттăн! Кун пек хурласса пĕлнĕ пулсан, тирĕс шывĕ те ĕçтерместĕмччĕ.

**Карпов.** Семен Сидорович! Мана пар-ха! Хуть те пичкипех ĕçтерсе яр.

**Семен.** Сан валли эрех юлмарĕ, господа тăла çăпата... Эсĕ ытла инçетрен килнĕ хăна мар-ха, питех ӳпкелемĕн... Вăрману та хăвăнах сан, эрех ĕçмесĕрех ăшăтĕ.

**Чекалкин.** Семен Сидорович! Семен Сидорович! Мана ĕçтер-ха! Питĕ шăнтăм...

**Семен.** Эй, ха! Чекалкин-нахалкин та кунта-и?

**Чекалкин.** Кунта, Семен Сидорович... Шăнса вилетĕп, ĕçтер-ха тархасшăн.

**Семен.** Ухмах çын пек калаçса ан тăр-ха, эсĕ, Чекалкин тус. Сан чухлĕ вĕреннĕ çынна ман пек тĕттĕм çын хăна туни те килĕшмĕ. Акă, Морев килсен хăна тăвĕ сана. Сирĕн пеккисене хăна тума вăл пит маçтăр пирĕн. (*Хуçасем патĕнчен юрă антрашкаласа иртсе каять*).

Хĕрхў, хĕрхў хĕр парать,
Ула курак туй тăвать,
Хурчки туя каясшăн...

(Вучах умне пырса ларса, юрă антрашкаланă хушăрах çывăрса каять).

**Макдональд** (*ўсĕр, аллисене вĕрентен вĕçертме хăтланать, вĕçертеймест*). О, да!.. Хытă çыхнă, проклятăйсем... Мистер Карпов! Мистер Карпов!

**Карпов.** Кунта эпĕ, господин Макдональд!

**Макдональд.** Мистер Карпов, калăр-ха тархасшăн, мĕн тума пултараççĕ вĕсем пирĕнпе?

**Карпов.** Пĕлме хĕн, господин Макдональд... Тем те тума пултарĕç вĕсем.

**Макдональд.** О, мадонна пресвятая! Кунтан чипер çăлăнсан, Раççея ура ярса пусмастăп.

**Карпов.** Питех ан хумханăр-ха, господин Макдональд... Ман чĕре çунмасть пуль тетĕр-и эсир?

**Иван** (*вăранса Семен çывăрнине курать*). Хуралç çывăрать-çке пирĕн... Ак япала? (*Кăшшавуй çинчен тухса вучах патне пырать.*) Семен, мĕн тăван эсĕ?

**Семен** (*сасартăк вăранса ура çине тăрать*). Е?!

**Иван.** Сана мĕн, тăманасем çавăрса илнĕ-и?

**Семен.** А батюшки мой, сĕнк пулса кайнă, едрит-кутрит... (*Çыхăнса тăракан хуçа-*

*сене шутласа илсе.*) Пурте шӗкӗрех пулас та-ха...

**Иван.** Супрăн пулсан, кӳр, Моревсем киличчен хам хураллăп. Выртса кан.

**Семен.** Хаваспах, Иван... Темĕн, ытлашшипех йывăрлантăм çавă. (*Револьверне хывса парать.*) Акă, ме, тарас-тăвас пулсан, ним шарламасăр шатлаттар.

**Иван** (*револьвере кĕсъине чиксе*). Ăçта кайччăр вĕсем?..

**Семен.** Пĕлме çук, Иван. Запас пурри кансĕрлемĕ. Ну, чипер тăр...

**Иван.** Ыр кaç пултăр...

(Семен кăшшавуя кĕрсе çывăрма выртать. Иван хуçасем патнелле каять.)

**Мĕкĕте** (*ӳсĕр. Ивана курсан*). Иван! Салт! Мĕнле хăян эсĕ хуçана çыхма! Асту вара, шăм-шаккунтан кĕвенте аватăп! (*Юрă антăрашкалама пуçлать*).

Я ухарь купец...
Я ухарь купец...
Ухарь купец, удалой молодец...
Я ухарь купец...

**Макдональд.** Эй, мистер! Иртсе ан кай-ха, салтса яр! Мана салтсан, тĕнчипе паллă çын пулăн. Тĕнчери мĕнпур ырă çынсем сан ятна мухтĕç. Салтса яр тархасшăн... Часы паратăп, ылттăн çĕрĕ, укçа—мĕн чухлĕ кирлĕ?!.

(*Темĕн ăнланмалла мар сӳпĕлтетсе юрă антрашкаласа юлать.*)

**Чекалкин.** Эх, Иван Петрович, Иван Петрович... Мĕн усал турăм ха эпĕ сире? Ниуштă эсĕ те ĕненми пултăн мана?

**Иван.** Эпĕ сана яланах ĕненсе пурăннă. Паян хуҫа умĕнче эс пирĕн хута кĕменни тĕлĕнтерчĕ мана.

**Чекалкин.** Эх, Иван Петрович, Иван Петрович... Сан шутпа эсир алăка ҫĕмĕрсе кĕмелле... А манăн, сирĕншĕн тĕрмене каймалаччĕ пулĕ?

**Иван.** Эпĕ, ҫĕмĕресшĕн марччĕ...

**Чекалкин.** Маншăн та, ҫын кил-ҫуртне разбойла пырса кĕни пушшех киревсĕр япала. Пуринчен ытла, тепĕр минут ҫеҫ кĕтмелле пулнă... Хуҫасем, вăтăр пуса каялла парасси ҫинчен те, килĕшсех пыратчĕҫ. Эсир урса кайнипе алăка ҫĕмĕрсе кĕни пĕтĕм ĕҫе хупласа лартрĕ. Капла ĕнтĕ пит аван турăмăр тетри? Чипер ĕҫлес вырăнне, акă, ыранах казаксем персе ҫитĕҫ те, тураса тăкĕҫ. Ҫĕпĕре ăсатĕҫ. Ун чухне хăвах аса илĕн мана, анчах кайран пулĕ..

**Иван.** Тем каламалла ĕнтĕ? Тем турăмăр ĕнтĕ. Хам те пĕлместĕп.

**Чекалкин.** Мĕн туни пулнă ĕнтĕ, тем каласан та каялла тавăрас ҫук. Эпĕ те сирĕнпе пĕрлех пĕтетĕп. Эсир мана йывăҫ ҫумне ҫыхса лартнă тесе чĕрĕ хăварас ҫук. Поли-

ци мана тахçантанпах шырать. Эсир тытса параканнисем çеç пултăр, анчах шăнса вилес марччĕ. Чăн революционер пек, паттăрăн кĕрешсе вилесчĕ. Ы-ых... Ăшчике сивĕ тивнĕ пуçларĕ... Вут хĕрринче ăшăнайрасчĕ. Пурпĕрех ниçта та каяс çук эпĕ...

**Иван.** Юрать, Макар Иванăч... Пирĕн иксĕмĕрĕн нимшĕн те хирĕçмелли çук... Айта, кăшшавуя кĕрсе вырт... (*Салтса ярать.*)

**Чекалкин.** Тавтапуç, Иван Петрович. Эсĕ ырă тунине ĕмĕрте те манассăм çук.

**Иван.** Мĕнех вара? Хамăр çын тесе салтрăм. Айта, кайса вырт, кайса вырт...

Чекалкин кăшшавуя кĕрсе выртам пекки тăвать. Анчах, Иван хуçасем еннелле çаврăнса утнă хушăра, тухса чупать.

ЧАРШАВ.

## Иккĕмĕш картина

Сцена çавах. Бурлаксем те çав вырăнтах çывăраççĕ. Хуçасем те çыхăнсах тăраççĕ. Мĕкĕте ним пĕлми ўсĕрĕлсе кайнă, юрă антрашкалать. Карпов пушшех те шăннă. Иван каллĕ-маллĕ уткаласа çўрет.

**Мокдональд.** Начар компаньон эсир! Çав вунă процент пеккине чакараймарăмăр! Миçе миллион пайта пулаччĕ вăл? Ăçта вунă процент?

**Карпов.** Господин Макдональд, тархасшăн, кирлĕ мара ан калаçăр-ха эсир...

**Макдональд.** О, да! Мана калаçма юрать-и вара? Кунта Раççей вĕт... Анчах, аслă Великобритания тăвата çĕр миллион халăха пăхăнтарса усрать... Никамран та хăрамастăп эпĕ! Никам та чарма пултараймасть мана! Илтетĕн-и? Никам та!

**Карпов.** Господин Макдональд, тархасшăн чарăнăр-ха.

**Макдональд.** Мĕн чарăнăр! Кам эсĕ? Ăçта сан отряд? Ăçта Чекалкин пулăшăвĕ? Ăçта ун майлă халăх? Мĕн тума чыхтарса усран эсĕ вăл меньшевика! Тоже... Компаньон!

**Иван.** Мĕн илтетĕп эпĕ?.. Çук, Чекалкин вĕсен майлă çын пулма пултараймасть. Хăй çинчен элеклесе калаçнине куç умĕнче тăрă шыв çине кăлартăр вăл... (*Кăшшавуй çине чупса кĕрсе Чекалкина шырать. Тупаймасăр каялла чупса тухать.*) Мĕн куртăм эпĕ? Ара, сутрĕ-çке вăл мана?

(Моревпа Микула пăшалсем йăтса килеççĕ).

**Морев** (*Ивана курса*). Эсĕ хуралладăн-и? Аван, аван...

**Микула** (*Чекалкин çуккине астуса*). Григорий Петрович, Чекалкин çук-çке?

**Морев.** Чекалкин?.. Ăçта вăл? (*Иван ним шарламаннине курса*). Эсĕ салтса ятăн-и?

(Çав вăхăтра офицер командовать тунипе салтаксем тата Чекалкин пăшалĕсене пеме хатĕр тытса тухаççĕ).

**Морев.** Мĕн чула сутрăн, Иван?

**Офицер.** Отряд, пли!

(Салтаксем пăшал пereççĕ. Апчах Микулапа Морев кăшшавуй çине тарса кĕме ĕлкĕреççĕ. Çывăракан çынсем сике-сике тăраççĕ. Иван вырăнтах хытса тăрса юлать).

**Офицер.** Вперед!!!

(Пуринчен малтан Чекалкин револьверпа сикетухса, Ивана тăнă çĕртенех персе ӳкерет. Салтаксем бурлаксене хупăрласа ухтарма тытăнаççĕ. Хăшĕпĕрисем Мĕкĕтепе Макдональда салтаççĕ).

**Чекалкин** (*Иван патне пырса*). Тинех иксĕмĕрĕн хирĕçмелли пĕтрĕ. Вилĕм çырлахтарчĕ пире. (*Васкаса Карпова салтса ярать*). Господин Карпов! Эсир ирĕкре!

**Карпов.** Çăлнăшăн кама тав тумалла?

**Чекалкин.** Мана, Моисей Антонович!

**Офицер.** Тĕрĕс, господин Карпов. Господин Чекалкин систермен пулсан, хамăрах ухтаратчĕç...

**Карпов.** Чунтан тав тăватăп, Макар Иванович...

**Мĕкĕте** (*ура çине аран тăрать*). Стреля-яй!!!

**Макдональд** (*аран тайкаланса утса Карповсем патнелле пырать*). Мистер Карпов! Манăн чăваш халăхĕ юн ăшĕнче тапкаланса

выртнине курас килет. Вилём пурне те!

**Мĕкĕте.** Вилĕм!!!

**Чекалкин.** Итлемерĕр мана. Разбой хыçĕнчен кайса хăвăр пуçăрсене хăвăр çирĕр.

**Морев.** Ир савăнан, сутăнчăк! Эпир пĕтни нимех те мар. Миллион рабочи халăх таптаса тăкĕ сире!

**Чекалкин.** Пире-и?.. Ха-ха-ха!

**Карпов.** Пĕтер часрах, господин офицер!

**Офицер.** Отряд?!

(Салтаксем пăшалĕсене рабочисем çине тĕллесе пеме хатĕрленсе тăраççĕ.)

**Морев.** Сывă пултăр аслă революци!

**Иван.** Тĕрĕс, Морев... *(Юлашки вăйĕпе кĕсъинчен револьвер кăларса Чекалкин çине тĕллесе, кăшкăрса ярать.)* Сывă пултăр Аслă революци! *(Чекалкина персе ӳкерет, унтан хăвăрт офицере персе ӳкерме ĕлкĕрсе, хăй те йăванса каять. Револьверĕ аллинчен сирпĕнсе каять. Кĕтмен çĕртен пăшал сасси илтĕннипе, офицерпе Чекалкин йăванса ӳкнине курсан, салтаксем арпашса каяççĕ.)*

**Морев** *(салтаксем нимĕн тума аптăранине курса)*. Юлташсем! Пырăр ман хыçран! *(Пĕр самантра хăй патĕнче тăракан салтак аллинчи пăшала туртса илсе теприне çапса йăвантарса ярать. Çав вăхăтра ытти бурлаксем те салтаксене ярса тыт-*

*са ухтарма пуçлаççĕ. Укахье Иван патне чупса пырать.)*

**Морев** (*Чекалкин патне пырса*). Йыттайытă вилĕмĕ!.. Анчах сан пеккисем татах нумай-ха. Вĕсемпе кĕрешме нумай вăй хурас, нумай юн тăкас пулать...

**Семен**. А батюшки мой, халăх! Вилĕмрен хăтăлнă пек чух, хăйсене шыва вăркăнтарар!.. Çурхи шыв мĕн тути калать, ишсе пăхчĕр!

**Сасăсем**:

— Шыва ывăтас!

— Тытăр! Тытăр!

(Халăх кĕпĕрленсе пырса хуçасене ярса тытать. Юрла-юрла йăтса каяççĕ).

**Макдональд**. Протестую! Протестую!

**Карпов**. Господа, каçарăр тархасшăн!

**Мĕкĕте**. Эпĕ хуçа, астăвăр вара!..

**Укахье**. Ах, Иван...

**Морев**. Каярах курчĕ вăл тĕрĕслĕхе. Анчах хăйĕн йăнăшне ăнланчĕ вăл, чăн-чăн паттăр пек вилчĕ.

ЧАРШАВ.

Редактор А. Д. Кăлган.

Подписано к печати 15/II-41 г.
НТ 2424. Зак. № 767.
Тир. 2500 экз.
Объем 2,63
п. л. уч. авт. л. 2,5

г. Чебоксары, тип. № 1 Упр. изд.
и полиграфии при СНК ЧАССР.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Цена 2 руб. 20 коп.

Н. МРАНЬКА

# БУРЛАКИ

Драма в 4-х актах

Госиздат ЧАССР
Чебоксары ● 1941